чăваш халăх хаçачĕ

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă
1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă
1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă



СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă

# ХЫПАР



"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

86 /26492/ № | Юн кун, 2014, çу (май), 14 | Хакĕ ирĕклĕ | WWW.hypar.ru


## Коррупцишĕн çул хупă

«Хăрушлăхсăр Тăван çĕр-шыв» общество организацийĕ 2013 çул кăтартăвĕсем тăрăх патшалăх валли тĕрлĕ тавар сутăн илмелли, пулăшу ĕçĕсем пурнăçламалли сферăра регионсенче коррупци мĕнлерех вăй илнин рейтингне хатĕрленĕ. Чăваш Ен 83 регион хушшинче 73-мĕш вырăн йышăннă.

Тишкернĕ кăтартусене тĕпе хурас тăк – республикăра пĕлтĕр асăннă тĕллевсемпе 18,9 пин суту-илӳ ирттернĕ – пĕтĕмпе 37 млрд ытла тенкĕлĕх. Вĕсем тĕлĕшпе сăлтавлă 92 çăхав пулнă, 47 тĕслĕхре контракт тăвассине хирĕçленĕ.

Рейтингăн ытти пĕтĕмлетĕвне илес тĕк – коррупци асăннă сферăра уйрăмах тарăн тымар янă регионсен шутĕнче Чечен Республикине, Чукотка автономи округне, Дагестан Республикине палăртнă. Ку енĕпе чи «таса» регионсем – Брянск облаçĕ, Удмурти тата Тутарстан. Вĕсем 83-81-мĕш вырăнсенче.

**Ф.ПЕТРОВ**

*Рейтинг*

## Чăваш Ен – 20-мĕш вырăнта

***Раççей Правительстви тунти кун виçĕ çуллăх тапхăрти кăтартусене тĕпе хурса федераци субъекчĕсен ĕç тăвакан влаç органĕсен ĕç-хĕлĕн тухăçлăхне пĕтĕмлетекен рейтингăн малтанхи кăтартăвĕсене палăртнă. Кăмăллă хыпар: Чăваш Ен 2013 çул кăтартăвĕсемпе рейтингра темиçе карт çӳлелле çĕкленнĕ.***

Пĕтĕмлетӳ никĕсĕнчи кăтартусем чăннипех анлă: инвестицисен, бюджета хывакан налуксен калăпăшĕ, продукци çаврăнăшĕ... Çавăн пекех çынсен тупăшĕн виçине, ĕççĕрлĕх шайне, пурнăç тăршшĕне тата ыттине те шута илнĕ – ашшĕ-амăшĕн ăшшисĕр юлнă ачасен шучĕ таранах. Çак кăтартусемсĕр пуçне халăх хушшинче ирттернĕ ыйтăмсен пĕтĕмлетĕвĕсене те тĕпе хунă.

2013 çулхи ĕç тухăçлăхĕн кăтартăвĕсемпе Тутар Республики малти вырăна упраса хăварнă кăна мар, ытти регионтан тата та маларах кайнă. Ун хыççăн – Тюмень облаçĕ, Ханты-Манси автономи округĕ, Воронеж облаçĕ, Чечен Республики, Ямал-Ненец автономи округĕ, Мускав, Белгород, Курск облаçĕсем... Палăртма кăмăллă: Чăваш Ен те вĕсен хыççăнах талпăнать – 20-мĕш вырăнта. Çапла вара пирĕн республика 2013 çулта хăйĕн рейтингри вырăнне /маларах 24-мĕш йĕркене йышăннă/ самай лайăхлатнă – лидер шутланакан регионсен малти икĕ теçеткине кĕнĕ.

Иртнĕ çулхи кăтартусемпе çак шутран Хакаси, Краснодар тата Ставрополь крайĕсем, Брянск, Рязань, Калуга, Ленинград, Магадан облаçĕсем, Ненец автономи округĕ тухса ӳкнĕ.

Рейтингра чи кайра Кабарда-Балкар, Карел республикисем, Еврей автономи округĕ тата Курган облаçĕ – 80-83-мĕш вырăнсенче.

**Н.ДМИТРИЕВ**

# Акана хăвăртрах вĕçлемелле



Сергей ЖУРАВЛЕВ сăн ӳкерчĕкĕ

*Ĕнер республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Муркаш тата Хĕрлĕ Чутай районĕсенче пулчĕ.*

Е.Андреев ячĕллĕ кооперативра çурхи ĕçсемпе паллашрĕ. Çу уйăхĕн 13-мĕшĕ тĕлне кунта çуртрисене акмалли тĕллеве 83,3% пурнăçланă /районĕпе – 95%/. «Тăпрари нӳрĕке шăрăх хăвăрт пăслантарать, – терĕ М.Игнатьев. – Акана хăвăртрах вĕçлемелле».

ЯХПК кăтартăвĕ мĕншĕн япăхраха? «Çуркунне ир килчĕ пулин те уйхирте юр каярах ирĕлсе пĕтрĕ, çĕр айĕнчи шыв шайĕ çӳлте тăчĕ, – сăлтавне ăнлантарчĕ Виталий Семенов председатель. – Трактор тăпрана кăпкалатма кĕчĕ те лапрана путса ларчĕ. Аран тухса çĕр кушăрханă лаптăка куçрĕ. Ытти уйра та тăпра пулса çитессе кĕтме тиврĕ. Çавăнпа ака тăсăлчĕ».

Çу уйăхĕнчи хĕвеллĕ кунсем акана вĕçлеме пĕртте чăрмантармаççĕ. ЯХПКра çуртрин вăрлăхне тата 50 гектар çинче çеç тăпрана варăнтармалла. Хĕрӳ ĕçре – икĕ трактор, тăватă сеялка. Паян-ыран акса пĕтереççĕ.

Республика Пуçлăхĕ Суворов ячĕллĕ кооператива та çитрĕ: çурхи культурăсене акассине еплерех йĕркеленипе кăсăкланчĕ. Ĕнерхи кун тĕлне ака планне 77,7% тултарнă. Çурхи ĕçсене йĕркелес енĕпе ку хуçалăх та ыттинчен кая юлнă. М.Игнатьев кооперативри лару-тăрупа тĕплĕн паллашрĕ.

Уйра пысăк çитменлĕхсем куçа тăрăнмарĕç. Ĕç кал-кал пырать. Ака агрегачĕсем пĕр самантлăха та чарăнмаççĕ. Иртнĕ кунсенче хĕртсе пăхнă хĕвел тăпрана самаях типĕтнĕ. Акманни 100 гектар кăна юлнă. Ку – пĕр кун вăй хумалăх. Трактористсем куллен 2,5-шер пин тенкĕ ĕçлесе илеççĕ.

Республика Пуçлăхĕ Турай ял тăрăхĕнчи социаллă пурнăç ыйтăвĕсене те тишкерчĕ. Вĕсене администраци пуçлăхĕ Николай Павлов хуравларĕ. Хальхи вăхăтра килти хуçалăхсем кашни литр сĕте 14 тенкĕлле сутаççĕ. «Хак мĕншĕн чакать? – кăсăкланчĕ Чăваш Ен Пуçлăхĕ. – Çынсем выльăхран тупăш ытларах илччĕр тесе мĕншĕн продукци пухакансен хушшинче конкуренци йĕркелеместĕр? Ял тăрăхĕнче райпо тата икĕ предприниматель сĕт пуçтараççĕ. Тăваттăмĕшне продукци пухма явăçтарсан хаклăрах тӳлес шанăç ӳсет».

Республика Пуçлăхĕ Муркаш-Турай-»Сăр» автоçулăн Турай ял тăрăхĕнчи пайĕнче юсав епле пынипе кăсăкланмасăр иртмерĕ. «Чăвашавтодор» обществăн кăçал 6 çухрăм асфальт сармалла. Ĕç пуçланнă кăнаха. Автомашинăсем вĕтĕ чул турттараççĕ. Кĕркуннеччен Турайран пуçласа Чуманкасси ялĕ патне çитиччен асфальт сарма шантараççĕ. М.Игнатьев çул-йĕр строителĕсен ĕçĕпе кăмăллă. Ку тăрăхра çула хытарас ыйтăва нумай çул çĕклерĕç. Йывăр урапа тинех вырăнтан тапраннă.

Республика Пуçлăхĕ Хĕрлĕ Чутай районĕнче «Нива» тата «Коминтерн» кооперативсенче çурхисене акассине мĕнлерех йĕркеленине те тишкерчĕ. Пĕрремĕшĕ тĕллеве пурнăçланă: çуртрине 597 гектар акнă. Кунсăр пуçне куккурус – 80, горчица 20 гектар акасшăн. Иккĕмĕшĕ 1073 гектар акма палăртнă, тĕш тырă тата пăрça йышши культурăсен вăрлăхне тăпрана 965 гектар çинче варăнтарнă. Куккурус 270 гектар йышăнĕ.

М.Игнатьев Тралькасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕнчен Елена Лаврентьевăран килти хуçалăхсенче выльăх мĕн чухлĕ усранине ыйтса пĕлчĕ. Шел те, кĕтӳ пĕчĕкленсех пырать. Сăлтавĕ – ялсем ватăлнинче. Çамрăксем пурăнма хулана куçаççĕ. Килти хуçалăхсемшĕн сутлăх сĕт хакĕ Тралькасси енче те 14 тенкĕ таран чакнă. Продукци мĕншĕн йӳнелет? М.Игнатьев ыйтăва тĕплĕн тĕпчерĕ.

«Хĕрлĕ Чутайсен сухаламан çĕр мĕн чухлĕ?» – кăсăкланчĕ вăл. «Пилĕк пин гектар», – хуравларĕ район администрацийĕн пуçлăхĕ Александр Башкиров. «Çакăн чухлĕ лаптăка эсир мĕнле майпа пусă çаврăнăшне кĕртесшĕн?» – пĕлесшĕн пулчĕ Михаил Васильевич. А.Башкиров сакăр фермер хуçалăх никĕслеме бизнес-план хатĕрленине, вĕсем парлак çĕре сухаласа ял хуçалăх культурисем акма тĕллев лартнине пĕлтерчĕ. Республика Пуçлăхне унăн хуравĕ тивĕçтермерĕ, пушă выртакан мĕн пур лаптăка пусă çаврăнăшне кĕртмеллине аса илтерчĕ.

Кăçал «Коминтернра» 3 пин ытла гектар çинче ял хуçалăх культурисем çитĕнтерме тĕллев лартнă. Республика пуçлăхĕ ЯХПК ертӳçинчен Альбина Новиковăран акакансухалакан лаптăка пысăклатма ыйтрĕ. Председатель шухăшласа пăхăпăр терĕ. Районти ял хуçалăх предприятийĕсен ертӳлĕхĕ ĕçе пĕрле тытăнса çум курăк хуплакан мĕн пур çĕре сухаласан çеç Хĕрлĕ Чутайсем çивĕч ыйтăва татса парĕç.

■ **Юрий МИХАЙЛОВ**

***Раççей почтин мĕн пур уйрăмĕсенче «Хыпара» 744 тенкĕ те 12 пуспа, «Хыпар-шăмат куна» 321 тенкĕ те 96 пуспа çырăнтараççĕ.***

*Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Указĕ*

## Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ - Чăваш Республикин финанс министрĕ çинчен

Чăваш Республикин Конституцийĕн 72 статйин 6-мĕш пунктне тĕпе хурса çапла **йышăнатăп:**

1. Светлана Александровна Енилинăна Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ - Чăваш Республикин финанс министрĕ пулма уйăрса лартас.

2. Çак Указ ăна алă пуснă кунран пуçласа вăя кĕрет.

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.**

Шупашкар, 2014, çу, 13, 62 №.

# КУН хыççăн КУН

☎ 56-04-26

## Юрий Феофанов – чи лайăххисен йышĕнче

***Вăрнарти 1-мĕш шкулта физика предметне вĕрентекен Юрий Феофанов физика, математика, хими тата биологи учителĕсен Пĕтĕм Раççейри конкурсĕнче çĕнтернĕ.***

Вăл – "Пулас ученăйсен пулăшуçи" номинаци лауреачĕ. Асăннă конкурса "Современное естествознание" фонд пуçарăвĕпе йĕркеленĕ. Унăн тĕллевĕ – шкулта биологи, математика, физика тата хими предмечĕсен чи лайăх вĕрентекенĕсене хавхалантарасси, пулăшасси, пĕр-пĕрин опычĕпе паллаштарасси, аслă шкулсемпе пĕлӳ çурчĕсен хушшинче туслă çыхăну йĕркелесси.

Конкурс йăлана кĕнĕ тăрăх виçĕ номинаципе иртнĕ – "Çамрăк учитель", "Вĕренекене воспитани паракан учитель", "Пулас ученăйсен пулăшуçи". "Пулас ученăйсен пулăшуçи" номинацире 350 педагог лауреат ятне тивĕçнĕ. Конкурс çĕнтерӳçисене пурне те 35000 тенкĕпе танлашакан грантпа хавхалантарĕç. "Вĕрентӳре тава тивĕçлĕ ĕçсем тунăшăн" преми лауреачĕсем 150000 тенке тивĕçĕç. Чыслав çĕртме уйăхĕн 30-мĕшĕнче Мускав облаçĕнчи "Клязьма" пансионатра иртĕ.

**Р.ИВАНОВА.**

## Слета хутшăннă

***Хусанта çамрăксен "Волга" центрĕнче Атăлçи тăрăхĕнчи волонтерсен слечĕ иртнĕ. Ăна РФ Çамрăксен енĕпе ĕçлекен федераци агентствипе "Хусан – 2013" ĕç тăвакан дирекци йĕркеленĕ.***

Мероприятире спорт ăмăртăвĕсем ирттерме пулăшасси тата ыр кăмăллăх акцийĕсем йĕркелесси çинчен калаçнă, çак юхăмсене аталантармалли мелсемпе паллашнă. Çавăн пекех унта Мускавра 2015 çулта шывра ишес енĕпе тата 2018 çулта футбол енĕпе тĕнче чемпионачĕсене ирттерме хутшăнас ыйтусене пăхса тухнă. Пирĕн ентешсенчен унта "Команда-2018" организацин регионти уйрăмĕн "Спорт мероприятийĕсем йĕркелесси" юхăм ертӳçи Оксана Викторова, И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн волонтер центрĕн кураторĕ Дмитрий Александров тата Мускав автомобильпе çул-йĕр институчĕн Шупашкарти филиалĕн волонтер центрĕн ертӳçин çумĕ Ксения Александрова хутшăннă.

**О.МАСЛОВ.**

## Музейра – çĕнĕ курав

***Шупашкар районĕнчи Ишекри тавра пĕлӳ музейĕнче "Юрататăп сана, манăн тăван тăрăхăм" сăн ӳкерчĕксен куравĕ уçăлнă. Ăна Культура çулталăкне халалланă.***

Мероприятие Ишекри вăтам шкулта вĕренекенсем, Мăн Маркари культура çурчĕн директорĕ С.Никифорова, ял халăхĕ хутшăннă. Выставкăна асăннă музей ертӳçи Е.Смирнова уçнă. Экспозицире – Ишекри вăтам шкулта кĕçĕн классене вĕрентекен Екатерина Григорьевăн ĕçĕсем. Пултаруллă учительницăн сăн ӳкерчĕкĕсем куракана чăваш халăхĕн аваллăхĕпе, йăли-йĕркипе, культурипе, маттур çыннисемпе паллаштараççĕ. Сăмах май, Екатерина Ивановна хăйĕн ĕçĕсене курава пĕрре кăна мар тăратнă. Вĕсемпе паллашма халăх йышлă çӳрет. Илемпе, талантпа киленекенсене Ишекри пĕлӳ çуртĕнче ăс пухакансем чăваш юрри-кĕввипе, илĕртӳллĕ сăввисемпе савăнтарнă.

**А.ГРОМОВА.**

## Çамрăк шашист çĕнтерĕвĕ



***12-ри Даниил Леонидова Чăваш Енре пĕлмен çын çук пулĕ. Республикăри чи çамрăк шашист чылай ăмăртура мала тухса паллă спортсменсене те тĕлĕнтерет.***

Пĕлтĕр вăл тĕнче турнирĕнчен виçĕ медальпе таврăннăччĕ. Кăçалхи çитĕнĕвĕсем те савăнтараççĕ. Çак кунсенче Беларуçри Пинск хулинче иртнĕ Европа ăмăртăвĕнче пирĕн ентеш пухмача икĕ "ылтăнпа" тата пĕр "кĕмĕлпе" пуянлатнă. Шупашкарти "Энергия" спорт шкулĕнче ăсталăхне туптаканскер "миникадетсем" ушкăнра (2001-2003 çулсенче çуралнă шашистсем) тупăшнă. Унăн тренерĕ Вячеслав Сухович пĕлтернĕ тăрăх – Даниил пур вăйăра та лайăх кăтартупа палăрнă, шашкăлла хăвăрт выляс енĕпе кăна ăна пĕр очко çитмен.

**Е.АНДРЕЕВ.**



ПУБЛИЦИСТ ШУХĂШĔ

# ШУПАШКАР КИНОФЕСТИВАЛĔ ЧĂВАШСЕМСĔР АН ИРТТĔР

**Çу уйăхĕн 19-мĕшĕнче республикăн тĕп хулинче халăхсен хушшинчи кинофестиваль уçăлать. Кино уявĕ Чăваш Енре çиччĕмĕш хут иртет. Çулран çул унăн сумĕ ӳссе, ырă ячĕ сарăлса пырать. Киноискусствăна хаклакансемшĕн те, ахаль кураканшăн та вăл – пĕлтерĕшлĕ пулăм. Пысăк экран çинче пахалăхлă фильмсем пăхма, паллă артистсемпе куçа-куçăн курса калаçма май пурри те илĕртет çынсене.**

**Кинофестивалĕн курăмлă тепĕр енĕ – сахал йышлă халăхсен кинематографĕсен ĕçĕсене халăх патне çитерни. Кăçал акă, сăмахран, тĕп конкурссăр пуçне наци киностудийĕсен конкурсне уйрăм ирттерме палăртнă. Паллах, çак тупăшура хамăрăн, чăвашсен, кино ăстисен ĕçĕсене питĕ курас килет. Якутсен, пушкăртсен, тутарсен, хакассен ĕçĕсем кашни çул тенĕ пекех фестивале хутшăннине шута илсен – пушшех те... Кӳршĕсенчен юларах пыни кӳрентерет, хамăра хамăр хисепе хуман пек туйăнать. Чăваш Енре иртекен фестивальте чăваш режиссерĕсем ӳкернĕ фильмсене кăтартмаллах ĕнтĕ. Вĕсем, тен, конкурса хутшăнмалăх "пиçсе" çитеймен те пулĕ. Çапах та çынсене кăсăклантарма пултараççех. Ку шухăш халĕ çеç тĕвĕленсе килнĕскер мар. Çакăн йышши кăмăлсăр калаçусем темиçе çул каяллах илтĕнкелетчĕç.**

**Халĕ пăр тапранчĕ темелле-ши: VII кинофестивале хатĕрленнĕ май ирттернĕ пресс-конференцире кăçал чăваш авторĕсен фильмĕсене кăтартма шухăшлани çинчен пĕлтерчĕç. 2014 çулта, киноискусствăшăн пĕлтерĕшлĕ çулталăкра, çакă питех те вырăнлă пулĕччĕ. Çурла уйăхĕн 27-мĕшĕнче "Кино тата фотопромышленноçа национализацилесси çинчен" декрет кăларнăранпа 95 çул çитет. Чăваш Республикинче те 1920-1930 çулсен чиккинче наци кинопроизводстви йĕркеленнĕ. Çав тапхăрта чăваш кинофильмĕсем кун çути курни чăваш халăхне çутта кăларас тата культурине аталантарас тĕлĕшпе тунă мал курăмлă утăм пулса тăнă. Чăваш кинематографийĕн историйĕ Иоаким Максимов-Кошкинский тата Тани Юн ячĕсемпе тачă çыхăннă. Вĕсем пĕр ĕмĕре яхăн каялла ӳкернĕ фильмсем паян та сумне, пĕлтерĕшне çухатман. Çĕршыв çĕнĕ саманара ура çине тăнă тапхăрта кино ĕçне пысăка хума пултарнă пулсан – халĕ мĕн чăрмантарать? Чăвашсен режиссерсем те, операторсем те, продюсерсем те пур. Халĕччен сахал мар фильм ӳкернĕ, анчах вĕсене телекуравпа пăхма та, кинотеатрсенче курма та май çук. Çакăн евĕр лару-тăрура тĕнче шайне çĕкленесси пирки калаçни сăмах ваклани кăна.**

**Çапах та чăваш киновĕ малашлăхсăр тесе калассăм килмест. Шанăç юлашкинчен пĕтнине шута илсен... Юлашки вăхăтра пулса иртнĕ ĕçсем çапла пĕтĕмлетме хистеççĕ. Чăваш кинематографисчĕсем пĕрлешме шухăш тытни нумай проекта пурнăçа кĕртме май парасси иккĕлентермест. Пĕрлĕхре – вăй. Республикăра пултарулăх ушкăнĕсем иккĕ-виççĕ кăна мар, темиçе те. Анчах вĕсем кашни хăй тĕллĕн ĕçленĕренех, ахăртнех, пысăк çитĕнӳсемех тăвайман. Культура министерстви те пĕрлĕх йĕркелес шухăша ырласа йышăннă. Капла наци кинофильмĕсене хатĕрлекенсене республика, Раççей гранчĕсене илме майсем ытларах пулĕç. Пĕр пухура чăваш кинематографисчĕсем патшалăх пулăшăвĕсĕр курăмлă ĕçсем хатĕрлеме йывăррине палăртрĕç. Чăнах та, республика темиçе çул каялла пĕртен пĕрре Н.Бичурин çинчен фильм ӳкерме нухрат уйăрнă пулнă, ăна та вĕçне çитереймен.**

**Çак ыйтупа кăсăкланса чылай çăл куç информацийĕпе паллашрăм. Бурятсен ырă тĕслĕхĕ пирки çырни куç тĕлне пулчĕ. Правительство наци фильмĕсене хатĕрлекенсене тавăрса памалла мар субсидипе тивĕçтерме йышăннă. Укçа-тенкĕне ачасемпе çамрăксем валли, социаллă пĕлтерĕшлĕ темăсене çутатакан, анимаци наци фильмĕсене ӳкерекенсем илме пултараççĕ. Бюджет пулăшăвĕпе кинематографистсен тăкаксене саплаштарнисĕр пуçне регионсен хушшинчи кинофестивальсене, ытти мероприятие хутшăнма ирĕк пур. Çапла майпа республика ертӳлĕхĕ наци фильмĕсене аталантарма, кинематограф тытăмĕнчи çыхăнусене çирĕплетме палăртать.**

**Патшалăх тĕревĕ пурри сисĕнетех çав: юлашки вăхăтра Бурятире наци киновĕ вăйлă аталанать. Уйрăмах С.Лыгденов режиссер бурят чĕлхи çинчен ӳкернĕ фильмсемпе палăрнă. "Булаг" картинăра, сăмахран, сăнарсем бурятла калаçаççĕ. Ку фильм халăхсен хушшинчи никама пăхăнман кинофестивалĕн "Офсайд" программинче пĕрремĕш вырăн йышăннă, Якутири халăхсен хушшинчи фестивалĕн гран-прине çĕнсе илнĕ. Çак фильм пирки кăшт асăрхаттарни, систерни шайĕнче пултăр тесе çыртăм. Шел те, "Чăваш халăхĕн йышĕ çулран çул чакса пырать. Чăвашла фильмсене пăхакансем сахалланаççĕ. Апла тăк мĕншĕн ӳкермелле?" – текен те çук мар. Çапла шухăшлани, калаçни тĕрĕсех мар. Манăн шухăшăмпа – çитĕнӳ сăнарсем хăш чĕлхепе калаçнинче мар. Чăваш чăвашсем пирки чăвашла кĕнеке çырмасан, кино ӳкермесен тата кам тăвĕ çак ĕçе?**

**...Пуçламăшĕ пур. Чăваш кинематографĕсен пĕрлĕхĕ тавра пуçланă сăмах патне таврăнар-ха. Хальлĕхе вăл Чăваш Республикинче ĕçлекен общество организацийĕ шутланать. Малашне, тен, Раççей союзĕн регион уйрăмĕ те пулса тăрĕ. Грантсем çĕнсе илме, паллах, пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕççем кирлĕ. Телее, наци фильмĕсем хатĕрлес тĕлĕшпе нумай çул ĕçлесе пуян опыт пухнă, шанăç паракан специалистсем чăваш кинематографисчĕсен йышĕнче пур.**

■ **Валентина БАГАДЕРОВА**

## Çанталăк çинчен

Паян ăмăр çанталăк пулать, аслатиллĕ çумăр çăвать. Çил хĕвел анăçĕнчен çеккунтра 2 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 19, çĕрле 14 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 752 мм, сывлăшри нӳрĕк 90 процент.

**Кун тăршшĕ 16 сехет те 16 минут.**

Ыран уяр çанталăк пулать. Çил çурçĕр-хĕвел тухăçĕнчен çеккунтра 2 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 21, çĕрле 13 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 758 мм, сывлăшри нӳрĕк 43 процент.

**Кун тăршшĕ 16 сехет те 20 минут.**

*Тимлĕх*

# Ветерансене – чыс та хисеп!

***Шупашкар район больницин тĕп врачĕ çуллен Аслă Çĕнтерӳ кунĕ умĕн медицинăра вăй хунă вăрçă ветеранĕсене килне çитсе уяв ячĕпе саламлать.***

Чĕрĕк ĕмĕр каялла Кӳкеç поликлиникинче йĕркеленĕ савăнăçлă тĕл пулăва фронтовиксем çирĕмĕн ытла пуçтаранннă. Кăçал чаплă праçнике виççĕн çеç /килте/ кĕтсе илнĕ. Çу уйăхĕн 8-мĕшĕнче Михаил Алексеев тĕп врач, унăн çумĕ Аниса Юрьева, кадрсен пайĕн специалисчĕ Людмила Федотова районăн Ишлейри 2-мĕш больницинче пулчĕç, унта сипленекен Герман Васильев фронтовикпа курнăçрĕç.

Герман Васильевич Çĕрпӳ районĕнчи Çӳлти Хыркассинче çуралнă. Çу уйăхĕн 18-мĕшĕнче 91 çул тултарать. 1941 çулта Çĕрпӳри фельдшер шкулĕнчен вĕренсе тухнă та утă уйăхĕн 21-мĕшĕнче Хĕрлĕ Çар ретне тăнă. Сталинград фронтĕнче – стрелоксен 743-мĕш полкĕн санитари взвочĕн командирĕ, Курск пĕккинче – танк бригадин 30-мĕш полкĕн фельдшерĕ. Днепр юхан шывĕ урлă каçсан йывăр аманнă, темиçе уйăх госпитальте сипленнĕ. Иккĕмĕш ушкăнри инвалида кăларсан ăна килне янă. Вăл Хĕрлĕ Çăлтăр, I степень Тăван çĕр-шыв вăрçин орденĕсене, "Çапăçури паллă ĕçсемшĕн" медале, ытти наградăна тивĕçнĕ. Герман Васильевич темиçе çул Муркаш район ĕçтăвкомĕн сывлăх сыхлавĕн пайĕн тата Шетмĕпуç врач амбулаторийĕн заведующийĕ пулнă. 1952-1991 çулсенче – Шупашкар районĕнчи Ишекри врач амбулаторийĕн фельдшерĕ.

– Герман Васильевич, Аслă Çĕнтерӳ 69 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатăп, сывлăх сунатăп. Савăнăçлă кăмăлтуйăмпа пурăнса çĕр çулах çит! – терĕ М.Алексеев. Чĕрĕ чечек тыттарчĕ, парне пачĕ.

Хĕвел хĕртме тытăннăранпа çĕнтерӳçĕ куллен урама тухса ларать, ешĕлленекен тавралăх илемĕпе киленет.

– Мана саламланăшăн пысăк тав! – терĕ фронтовик, туйине самантлăха çын асăрхаман кĕтесе тайăнтарнăскер. – Сире, ĕçтешĕмсене, куртăм та – савăнтăм, хама сывлăхшăн питĕ сиплĕ эмел ĕçнĕ пекех туйрăм...

Çар фельдшерĕ хаяр çапăçусене аса илчĕ. Тĕп врач çумĕ Татьяна Филиппова ертсе пынипе терапи пайĕн заведующийĕ Тамара Иванова, ытти врачпа медсестра ăна тăрăшса сиплеççĕ. Хăйне чыс тунăшăн ветеран кăмăллă юлчĕ.

1956-1976 çулсенче Чумкассипе Çĕньялти фельдшер-акушер пункчĕсен заведующийĕнче, шăл тухтăрĕнче, 1976-1987 çулсенче Çĕньял ĕçтăвкомĕн председателĕнче тăрăшнă Петр Владимиров ветерана та Шупашкар районĕнче лайăх пĕлеççĕ. Вăл Тăвай районĕнчи Йăнтăрччăра 1926 çулта çуралнă. 1943 çулта вăтам шкул пĕтерсенех ăна Хĕрлĕ Çара илнĕ. Пулеметчик ăсталăхне туптанă. Пирĕн чаçсем Буг тата Висла юхан шывĕсем урлă каçнине халĕ те лайăх ас тăвать. 1944 çул



● *М.Алексеев тĕп врач Г.Васильев фронтовика саламлать.*

вĕçĕнче ăна Сарă тури танк училищине вĕренме янă. Вăрçă хыççăн вăл виçĕ çул Уралта танк полкĕнче хĕсметре тăнă, каярахпа Киеври медицина-çар училищинчен вĕренсе тухнă. Чăваш АССР сывлăха сыхлас ĕçĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, II степень Тăван çĕр-шыв вăрçин орденĕн, "Çапăçури паллă ĕçсемшĕн" медаль, ытти награда кавалерĕ.

Пӳртре коляска çинче ларараканскер хăйĕнпе тĕл пулма килнисене тӳрех палларĕ, питкуçĕ савăнăçпа çиçрĕ. Йывăр чире пула сасси йăмшакланнă пулин те калаçма тăрăшрĕ. Тĕп врач ăна Хĕрлĕ Çар тата совет халăхĕ фашистсен Германине 1941-1945 çулсенчи Аслă вăрçăра çĕнтернĕренпе 69 çул çитнĕ ятпа ăшшăн саламларĕ.

Юртукассинчи Елена Осипова /кăрлач уйăхĕнче 92 çул тултарнă/ Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Чăрăшкассинче çуралнă. 1941 çулта Çĕрпӳри фельдшер-акушер шкулĕнчен вĕренсе тухнă. Çар ретне ăна 1942 çулта илнĕ. Икĕ çул эвакогоспиталь фельдшерĕ пулнă: çĕрçĕр çынна сипленме пулăшнă. 1944 çулта радистсен курсĕнче вĕреннĕ. Вăрçă вĕçленичченех çыхăну полкĕнче хĕсметре тăнă. 1945-1983 çулсенче Юртукассинчи, Шемшерти, Çĕнĕ Тутаркассинчи медицина учрежденийĕсенче вăй хунă. Тивĕçлĕ канăва кайсан та ĕçе пăрахман: хуралçăра вунă çул тăрăшнă. II степень Тăван çĕр-шыв вăрçин орденне, ытти наградăна тивĕçнĕ.

Елена Егоровна тĕп больницăран килнĕ хăнасене кĕреке умĕнче кĕтсе илчĕ. Тĕп врач унăн сывлăхĕпе кăсăкланчĕ.

– Фельдшер киле килсе юн пусăмне тĕрĕслерĕ, – терĕ ветеран. – "Хăвна начар туйсан больницăна хуратпăр", – терĕ. Выртмастăп. Çанталăк ăшăтрĕ. Урама тухса ларатăп, хĕвелрен вăй илетĕп. Ывăлăмпа кин юратса пăхаççĕ. Пурăнас килет...

■ **Михаил СЕРГЕЕВ**

# Экстремизмшăн айăпланă

***Шупашкарти Мускав районĕн сучĕ И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕн студенчĕ Ринат Феизов тĕлĕшпе пуçарнă уголовлă ĕçре приговор палăртнă. Республикăра час-часах усă курман статьяпа айăпланă: УК 280 статйин 1-мĕш пайĕпе – экстремизм ĕçне пурнăçлама чĕннĕшĕн.***

Уголовлă ĕçе Федерацин хăрушсăрлăх службин республикăри управленийĕн следстви пайĕ пуçарса тĕпченĕ. Следстви тата суд палăртнă тăрăх – Феизов кăçалхи пуш уйăхĕнче аэрозоль сăрă баллончикĕпе усă курса педуниверситетăн вĕренӳ корпусĕсенчен пĕрин стени çине киревсĕр сăмахсем çырнă: аслă çак шкулта вĕренекен, Туркменирен килнĕ студентсем тĕлĕшпе экстремизм ĕçĕсем тума чĕннĕ. Çавăн пекех фашистсен символикине ӳкернĕ.

Суд студента 30 пин тенкĕлĕх штрафланă. Приговор вăя кĕмен-ха.

ФХС управленийĕн пресс-службин пĕлтернĕ тăрăх – 2012-2013 çулсенче управлени ЧР ШĔМĕпе, Следстви комитечĕн республикăри управленийĕпе пĕрле ĕçленĕ май экстремизм сĕмĕллĕ çакнашкал преступленисемшĕн Шупашкарти электромеханика колледжĕн, коопераци техникумĕн тата Çĕнĕ Шупашкарти политехника техникумĕн студенчĕсене судпа айăпланă.

**Н.ДМИТРИЕВ.**

*Ял хуçалăхĕ*

# Кăвак хуппи уçăлатех

***"Хыпар" редакцине Канаш районĕнчи Анат Сурăмри ĕç ветеранĕнчен Сергей Русаковран ял пурнăçне хак панă самай хивре çыру килчĕ. Хуçалăхсен ĕçĕпе паллашмашкăн журналиста Кăшнаруй тăрăхне пырса курма йыхравлать. Çырура хускатнă ыйтусене авторпа пĕрле вырăнта тишкертĕмĕр.***

– Малтан "Правда" колхозран Анат Сурăмра юлнă производство-социаллă пурнăç çурт-йĕрне пăхса çаврăнар, – терĕ совет тапхăрĕнче хуçалăха ертсе пынă Сергей Васильевич. – Пасар реформисен тапхăрĕнче унăн никĕсĕпе ЯХПК йĕркелерĕç. Вăл панкрута тухсан Кăшнаруйри, Йĕрĕхçырминчи, Шăхальти тата пирĕн ялти пурлăхĕ йӳнĕ хакпа предпринимательсене, тулли мар яваплă обществăсене, фермерсене, хăш-пĕр килти хуçалăха куçрĕ. "Правда" ĕçченĕсем вун-вун çулта тар юхтарса тунăскере кĕске хушăра салатрĕç. Чылайăшĕ паян та юсавлă, тупăш кӳрет.

**– Колхоз ĕçченĕсем пурнăçа епле сыпăнтарса пынине аса илеймĕн-и?**

– "Правдăра" пин пуç сысна, 600 ĕне выльăх, 80-100 лаша, темиçе çĕр сурăх пулнă, вун-вун нутри /10-12 хĕрарăм ялти çĕвĕ цехĕнче унăн тирĕнчен сумка çĕленĕ/ усранă, тăвата пин ытла гектар çĕр çинче ял хуçалăх культурисем çитĕнтернĕ. Продукци сутса тунă тупăша колхоза аталантарма, социаллă ыйтусене татса пама янă. Колхозникăн ĕç укçи хула рабочийĕнчен пĕчĕкрехчĕ. Çапах вăл кашни çемьене 5-8 ача çитĕнтерсе пурнăç çулĕ çине тăратма, çурт-йĕр çаврăрма çитнĕ. "Правда" хыççăн йĕркеленнĕ обществăсемпе фермер хуçалăхĕсем çынсене этем пек пурăнма май паракан ĕç укçи тӳлеймеççĕ. Темиçе теçетке çынна çеç чун усрамалăх кĕмĕл параççĕ. Вĕсен шайĕпе урăхла пулаймĕ. Мĕншĕн тесен производстви "Правда" кăтартăвĕнчен нумай хут пĕчĕкрех. Хăвăрах шухăшласа пăхăр. Пирĕн ялта кăна механизациленĕ 9 витеччĕ! Кашнинче 8-10 çынран сахал мар вăй хунă. Машина-трактор паркĕнче, виçĕ ялти уйрăмĕсенче пурĕ 150-170 механизатор тăрăшнă. Акана, вырмана, утă хатĕрлеме, пахча çимĕç пухса кĕртме çĕр-çĕр çын хутшăннă. Тăвата ялта тĕп тата вăтам специалист, клубпа библиотека ĕçченĕ 50-ран кая мар тăрăшнă. Юлашки çулсенче Анат Сурăмри 9 витерен пĕринче кăна 40 яхăн ĕне выльăха, вăл шутра сăвакан 22 ĕнене хĕл каçараççĕ. Иккĕмĕшĕнчен кăшкарĕ çеç юлнă. Ыттине тахçанах сӳтнĕ.

**– Хытă сийлĕ çулпа ялăн кăнтăр енчи хĕррине тухрăмăр. Умра мĕнле çурт-йĕр?**

– Пĕрремĕшĕ – Чăвашпотребсоюзăн çăкăр пĕçерекен "Кооператор" обществин цехĕ. Унăн алăкĕ реформăсен тапхăрĕнче те хупăнмарĕ. Коллективра ĕçлекенсенчен ытларахăшĕ – Анат Сурăмсем. Кăшнаруйран 3-4-ăн. Юнашарах Тăван çĕр-шыва нимĕç фашисчĕсенчен хӳтĕлесе пуç хунă, пирĕн ялта çуралса ӳснĕ Кĕçтук Кольцов сăвăç музейĕччĕ. Культурăна нухрат çителĕксĕр уйăрма тытăнчĕç те ял администрацийĕ çурта хутса ăшăтма, электричествăшăн тӳлеме вăй çитереймерĕ. Музее, шкула хупрĕç. Цеха хирĕç – культура çурчĕ. Унта кĕрсе юрă-ташă ăстисемпе сăмахлама кăмăл пур-и? Алăкĕ çине çырса çапнă пĕлтерӳре клубăн ĕç йĕркипе паллаштарнă. Вăл эрнере пилĕк хутчен яра куна тăсăлать, клуба каçхине икĕ хутчен çеç уçаççĕ. Çамрăксен ĕç е вĕренӳ вăхăтĕнче кунта килме вăхăт çук. Вĕсене клубра 19-23 сехетсенче пухма май çук-ши?

**– Тата мĕнле объекта кăтартатăн?**

– Пĕтĕмĕшле врач офисĕнче пациентсене врачпа медсестра йышăнаççĕ. Унта аптека уçмаллах. Çынсем транспортпа эмел туянма е Шăхасана, е Канаша каяççĕ. Ялта лавккапа хупах лайăх ĕçлеççĕ. Эрех-сăра ассортименчĕ иккĕшĕн те питĕ пуян. Ĕлĕк ял библиотекине кĕнеке, хаçат-журнал вулама йышлă çӳренĕ. Халĕ темиçе çухрăмри Кăшнаруя утатпăр. Анат Сурăмри ача сачĕ кунĕпех пыл хурчĕн вĕлли пек сĕрленĕ. Хупрĕç. Пĕчĕккисене Кăшнаруя леçеççĕ.

Авă колхоз укçипе кирпĕчрен çĕкленĕ темиçе хутлă çурт. Ăна предпринимателе йӳнĕллех сутнă. "Правдăн" çăнăх авăртакан арманĕн, автотарасин, çăм таптаракан арманĕн алăкĕ ял-йышшăн куллен уçăччĕ. Виçĕ утăмрах – тырă типĕтмелли комплексчĕ. Пурне те юхăнтарчĕç. Йĕтем юписем вырма пынă вăхăтра кунĕ-çĕрĕпе ĕç шавĕ кĕрлесе тăнине тунсăхлăн аса илтереççĕ. Çурла-авăн уйăхĕсенче кунта аслисемпе танах шкул ачисем те ĕçлетчĕç. Авă, курăр, йывăçсен çумĕнче тахçан кашта таран тырă йăтăнса выртнă, халĕ çил вылякан пушă кĕлет ларать. Анаталла ик çĕр метр утсан колхозăн хăмла упрамалли складне куратпăр. Председатель ăна тата кирпĕчрен хăпартнă икĕ хутлă пӳрте ывăлне качака укçилле сутса ячĕ. Ял администрацийĕ çав объектсем йышăнакан çĕр лаптăкне те ăна уйăрчĕ. Паян ялта çĕрпе тухăçлă усă куракан, çулталăкра вун-вун тонна продукци сутакан, нумай çынна ĕçе явăçтаракан пĕр предприяти те çук.

**– Хресчен хуçалăхĕсем, тулли мар яваплă обществăсем "Правда" ĕçне тăсманшăн чунна ыраттарса пурăннине туятăп. Мĕншĕн вĕсем производство объекчĕсемпе кирлĕ пек усă курайман, колхоз хăвачĕсене упраса хăварса хушайман? Ытти районти нумай колхозăн харпăрлăхçи улшăнчĕ пулин те производство хăватне упраса хăварчĕç, продукци туса илеççĕ, çынсене ĕçлеттереççĕ. Кукăрмакăр çул "Правдăна" мĕншĕн шурлăх патне илсе тухнă?**

– Малтан колхоза, каярахпа ЯХПКна ертсе пыма рынок экономикин саккунĕсене лайăх ăнланакан, хуçалăх укçине перекетлĕ тытакан, унта ĕçлекенсене тӳрĕ çулпа ертсе пыракан, тăкака тупăшпа хупласа пыма пĕлекен çынна лартмарĕç. Кооператив тилхепине ӳсĕм тăвайман, ЯХПК çурт-йĕрне, техникине салатакансене тыттарса йăнăш турĕç. Ку ыйтăва колхоза реформăсен пуçламăшĕнче тата ЯХПКна ертсе пынисене памалла. Мĕншĕн "путлăха лекнине" вĕсем хуравлаччăр. Хăвăрт улшăннăскерсем пĕрлехи пурлăха салатнине ялйыш часах асăрхарĕ, чылайăшĕ ертӳçĕсемпе пĕрлех килти хуçалăха сĕтĕрчĕ. Пурлăха пайланă хыççăн çынсене ĕç вырăнĕпе тивĕçтернĕ пулсан паян никам та ятламĕччĕ. Нумай çынна хăйĕн тарĕпе тунă пурлăхăн пĕр татăкĕ те лекмерĕ.

**– Каçар та, çитменлĕхе çĕклекен ветерансене пенси ӳстерсе параççĕ-и? Мĕншĕн вĕсене пуху-тĕл пулура хускататăн?**

– Пенсие ӳстермеççĕ, ертӳçĕсем юратса пуçран шăлмаççĕ. Тен, ял тăрăхĕн пуçлăхĕ: "Хыпара" мĕншĕн начаррине çырса пĕлтертĕн? Сана çынран нумайрах кирлĕи?" – тесе ыйтĕ. Ялти вăй питти çынсем республика тулашне укçашăн çӳрени, вĕсене вырăнта ĕç вырăнĕ туса паманни кулянтарать. "Правда" хыççăн никĕсленĕ ОООсемпе фермерсен ĕçĕ мана тивĕçтермест. Кунсăр пуçне ялта социаллă ыйтусем пухăнаççĕ. Пĕри хамăн çемьенех пырса тиврĕ. Мăшăрăм йывăр чирлерĕ те стационара вырттарасса шанса Шăхасана, районăн тĕп больницине, кайрĕ. Врач ăна эмел ĕçме çырса панă, сиплеме больницăна хуман. Пусăрăнчăк кăмăлпа таврăнчĕ. Стационара вырттарас тесе унта икĕ хутчен кайрăм – ыйтăва татса параймарăм. "Йышăнма вырăн çук", – хурав пачĕ тĕп врач çумĕ. Ĕненмерĕм, палатăсене кĕрсе пăхса çӳрерĕм: пушă пĕр вырăн та курмарăм. Врач çумĕ патне виççĕмĕш хут кĕрсен çеç мăшăра сиплеме йышăнчĕç. Тĕп больницăн койка-вырăнне мĕншĕн сахаллатнине пĕлес тĕллевпе республикăн Сывлăх сыхлавĕн тата социаллă аталану министерствине çыру ятăм. Министр çумĕ республикăра пурăнакансен сывлăхне çирĕплетес тĕлĕшпе тăвакан калăплă ĕçсене пĕлтерчĕ. Çырура пирĕн тĕп больницăн койка-вырăнне сахаллатни çинчен пĕр сăмах та пулмарĕ.

**– Информаци кунне хутшăнатăн-и?**

– Хутшăнма тăрăшатăп, кашнинчех ыйту паратăп. Сăмахран, ройонăн тĕп больницин туалетне паянхи пурнăç ыйтнă пек юсама ыйтатăп. Пациентсен сывлăха тĕрĕслеттермешкĕн анализ пама унта кĕмесĕр май çук. Картишĕнчи туалетра хĕлле сивĕ, халсăр çынна шуçлак урайĕнче утăм тума çăмăл мар. Ăна хăтлăлатмалла, хĕлле ăшăтмалла. Хальлĕхе тĕп врач çак ĕçе пурнăçлама палăртнине мана пĕлтернипех çырлахать пек туйăнать.

**– Çыру çырса тата кама пулăшма май килчĕ?**

– "Кооператор" обществăра çăкăр пĕçерекенсене ĕç укçи сахал тӳленине, отпускра саккунра пăхнă 32 кун кантарманнине систерчĕç. Йĕркене пăсни çинчен Чăвашпотребсоюз канашне çыру ятăм, чирленĕ пирки пĕр хушă производствăна хутшăнайман çынсене сипленмешкĕн укçа уйăрма сĕнтĕм. Виçĕ ыйтăва та коллектив майлă татса пачĕç.

**– Калаçăва пĕтĕмлетер-ха. Кăшнаруй ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Алевтина Васильева пĕлтернĕ тăрăх – "Нива", "Сормовский" ЯХПКсем те саланнă, пурлăхне сутнă. Хальхи вăхăтра "Сормовский" общество 200 яхăн гектар çĕрпе усă курать, 100 ытла ĕне выльăх тытать, 20 яхăн çынна ĕçе явăçтарать. Кăçалхи ака уйăхĕн 22-мĕшĕнче иртнĕ аукционра вăл ял тăрăхĕнчи ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ 433 гектар лаптăка туянма укçа çитереймен. Ăна Мускаври "Триумф" общество малтанхи хакран виçĕ хут ытларах тӳлесе алла илнĕ. "Мария" обществăн Ешкилтре – 150, Г.Иванов фермерăн Анат Сурăмра – 250, "Пинер" тата "Ямашевский" обществăсен 200 тата 169 гектар. Ултă харпăрлăхçă аллинче пурĕ 1400 гектар çеç. Мускавсем хăйсен тӳпине çак уйăхра пусă çаврăнăшне кĕртесси паллă мар. Вĕсен вырăнта техника хатĕрĕ çук. "Правда" колхозăн пулнă пин ытла гектар пушă выртать. Ытти ял таврашĕнче те тухăçлă усă курман лаптăк çĕр-çĕр гектар. Вĕсене пусă çаврăнăшне кĕртекенсем, çынсене ĕçе явăçтаракансем тупăнĕç-ши?**

– Реформа нумай хуçалăхшăн майлă пулмарĕ. Апла пулин те чылайăшĕ йывăрлăха çĕнтерчĕ, аталану çулĕпе малалла кайрĕ. Пирĕн ял тăрăхĕнчи çĕр ĕçченĕсен пасар хутшăнăвĕсенче ӳсĕм тăвакансенчен мĕншĕн кайра пулмалла? Вĕсем ура çине çирĕп тăрасса – ял тăрăхĕнче пурăнакансемшĕн кăвак хуппи уçăласса – çирĕп шанатăп.

**– Хăш ертӳçĕсенчен ырă тĕслĕх илме сĕнетĕн?**

– Канаш районĕнчи Киров ячĕллĕ колхоз председателĕнчен Николай Андреевран, çĕнĕ саманара кирек хăш харпăрлăхлă хуçалăха аталантарса çынсене ĕçпе тивĕçтернĕ ертӳçĕсенчен, совет тапхăрĕнче ӳсен-тăранран, выльăхран продукци нумай туса илсе çынсен пурнăçне лайăхлатнă "Цивиль", "Канаш", "Путь Ленина", "Правда" колхозсене ертсе пынă Григорий Дмитриевран, Василий Дмитриевран, Василий Платоновран, Николай Ефимовран.

■ **Юрий МИХАЙЛОВ калаçнă**

# ВУЛАКАН ЫЙТАТЬ, СĔНЕТ, АСĂРХАТТАРАТЬ

## Пурнăç хакĕ

Юлашки вăхăтра эпĕ "Уçă общество институчĕ" пичетлесе кăларакан "Пушкин библиотекине" кĕртнĕ хайлавсемпе кăсăкланма пуçларăм. Çак кунсенче Варлам Шаламовăн "Колымские рассказы" кĕнекипе паллашрăм. Автор айăпсăртан халăх тăшманĕ туса хунипе Çурçĕрти "Вишерна" /1929-1932 ç.ç./ тата "Колыма" /1937-1953 ç.ç./ тамăкĕсенче хĕн курни çинчен ирĕке тухсан 20 çултан çырни историшĕн чăннипех пĕлтерĕшлĕ.

Хайлавсене лăпкăн вулама çук: çӳç-пуç вирелле тăрать, чун çӳçенет. Халăх тăшманĕ тесе 10-20 çуллăха чĕр тамăка янисен хушшинче пултарупллă çынсем – ăсчахсем, инженерсем, учительсем, партипе совет органĕсен ертӳçисем – ытларах пулнă. Нуша вĕсене пурне те танлаштарнă, ирĕксĕр ĕç вăйĕ туса хунă. Çĕтĕк тумлă, çинĕçименнипе ырханланса çитнĕ ристантсен чул кăлармалли, йывăç касмалли нормăсене тултарма тивнĕ. Çакна пултарайманнисене пăлахая пересçĕ тесе хĕненĕ, карцера хупнă, хирĕç чĕнсен персе пăрахнă, куншăн конвоир та, пуçлăх та явап тытман. Темĕнле йывăр килсен те кашниех: "Тен, чĕрĕ юлăп, ирĕке тухăп", – ĕмĕтшухăшпа кун ирттернĕ. Пурнăç хакне кунта аванах чухланă. Чăн та, асапа тӳсейменнипе çут тĕнчерен хăйсен ирĕкĕпе уйрăлакансем те пулман мар ĕнтĕ.

Чылайăшĕ, паллах, 10-20 çуллăх тамăкра выçса, шăнса, чирлесе вилнĕ е тĕрлĕ сăлтав тупса персе пăрахнипе леш тĕнчене ăсаннă. Унашкаллисен çĕтĕк тумне хывса илнĕ те виллисене чул хушăкне пăрахнă. Сăмах май, Çурçĕр сиввине лаша та чăтайман, этемĕн вара тӳсме тивнĕ...

Нумай çул асапланса ирĕке тухнă хыççăн таса ята тавăрнисем пулни-иртнишĕн совет влаçне таврăс çул çине тăман: çĕр-шыва тĕреклетессишĕн, халăх пурнăçне çăмăллатассишĕн ĕмĕр тăршшĕпех тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕ, патриот туйăмне çухатман. Кун пек тĕслĕх Чăваш хутлăхĕнче те сахал мар пулнă.

Пурнăç кирек камшăн та хаклă. Анчах паянхи саманара нухрата ытларах пуç çапакан йышланнине куратпăр. Хăшĕпĕри укçашăн тус-тăванне сутма хатĕр. Колыма калавĕсемпе паллашсан пурнăçа ытларах хакламаллине туятăн. Çутă тĕнчене пирĕнтен кашнийĕ ырă курма килет. Апла тăк пĕр-пĕрне хисеплемелле пирĕн, телейлĕ пурнăç тума пулăшмалла. Çынна ырă туни ырăпа таврăнать.

■ **Ревокат МОИСЕЕВ, общество корреспонденчĕ.** Комсомольски сали

## Çӳреме инçе

Эльменкасси çывăхĕнчи масарта ку тăрăхри вунă ял – Малти, Услă, Вăта, Çĕньял Пукашсен тата ыттисен – халăхĕ пурнăçран уйрăлсан ĕмĕрлĕх канлĕх тупать. Тĕрĕссипе, вĕсене асăнмашкăн çӳреме тăванĕсенчен чылайăшĕшĕн çывăх мар. Аслă ăру çыннисене унта çитсе килмешкĕн уйрăмах кансĕр.

Ку тăрăхра пурăнакансен шухăшĕпе – çĕнĕ масар уçма вăхăт çитнĕ. Ăна валли Вăта тата Услă Пукашсен хушшинчи пушă выртакан лаптăк – халăхра "Куçки çырми пуçĕ" текенскер – меллĕ пулмалла.

Асăннă ыйтупа вăрçă ветеранĕ Матвей Соловьев Хуракасси ял тăрăхĕн, район администрацийĕн пуçлăхĕсем патĕнче пулнă. Ертӳçĕсем ку енĕпе пулăшма шантарнă, анчах лавĕ паян кун та вырăнтан хускалман-ха.

■ **Ентешсем ыйтнипе Анатолий АНИШОВ.** Сĕнтĕрвăрри районĕ

## Тĕл пуласчĕ, калаçасчĕ…

Иртнĕ уйăхăн юлашки кунĕнче 82 çул тултартăм. Ачалăхăм Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин тапхăрĕпе пĕр килчĕ. Çавна май пурнăçра хурашурне самаях тӳссе ирттерме тиврĕ. Ман ӳсĕмри çул çитмен ачасем тĕрекленсе вăй илмесĕрех уй-хир ĕçĕсене кӳлĕнчĕç, фронта тухса кайнă ашшĕ-пиччĕшĕ вырăнне йышăнчĕç. Хамăра шеллемесĕр, йывăрлăха пăхмасăр Аслă Çĕнтерĕве çывхартассишĕн тăрăшрăмăр. Выçлăхпа сивĕ хавшатрĕ пирĕн сывлăха, çамрăк ĕмĕре кĕскетрĕ.

Çав вăхăтрах шкулта вĕреннĕ. Хĕл кунĕсенче çăпата кĕлли шăтса тухатчĕ те киле юр çийĕн тăла вĕççĕнех утса таврăнаттăмăр.

Ылханлă вăрçă вĕçленсен те канлĕх мĕнне пĕлмен: юхăннă хуçалăха уралантарма пикеннĕ, çул тунă, çурт-йĕр лартнă, тыр-пул çитĕнтернĕ, общество выльăх-чĕрлĕхне пăхса усранă. Кирек ăçта ĕçлесен те тивĕçе чыслăн пурнăçланă, атте-анне вĕрентсе каланине асра тытнă, вĕсен ятне яман.

Хамăр та ватăлтăмăр ĕнтĕ. Çавăнпах пулĕ тăван-пĕлĕш ылтăнран та хаклăрах пулса тăчĕ. Пĕр-пĕринпе тăтăшах тĕл пулаймастпăр. Юнашар ларса чун каниччен калаçас, иртнĕ вăхăта аса илес килет.

Аслă Çĕнтерӳ кунĕ ячĕпе "вăрçă ачисене" пурне те ăшшăн саламласа ырлăх-сывлăх сунатăп. Çулсем малалла ĕрĕхтерсен те чунпа эпир çав-çавах çамрăк-ха.

■ **Зоя НИКОЛАЕВА.** Шупашкар хули

## Таварпа кам тивĕçтерĕ?

Иртнĕ ĕмĕрте ял çынни хăйĕн çемйине тăрантарса усрамалăх пахча çимĕç, аш-пăш туса илнĕ. Халĕ вара хресчен хуçалăхĕн уссине манса пыратпăр, хамăра кирлĕ тавара лавккара туянатпăр. Çакă уйрăмах аслă ăру çыннисемшĕн меллĕ.

Анчах лайăх пурнăçăн тӳнтерлĕхĕ те пур. Пĕр енчен, çамрăксем çĕр ĕçĕнчен писрĕç, вĕсем хуланалла туртăнма пуçларĕç. Çавна май ялсем пушанса юлчĕç. 20-30 çул каялла Мартынкассинче 170-200 çын пурăннă тăк халĕ 70-ĕн кăна юлтăмăр. Вырăнта ĕçлесе шалу илекен 3-4-ăн çеç, ыттисем – тивĕçлĕ канурисем тата ĕççĕр шутланакансем. Кун пек чухне лавккари сутуçăсем тавар çаврăнăшĕн уйăхри планне ăçтан тултарччăр-ха?

Тепĕр енчен, йĕри-тавралла акăнман çĕр выртать, ялта хуçасăр кил вырăнĕсем хушăнсах пыраççĕ. 2014 çул пуçланнăранпа икĕ ватă çын пурнăçран уйрăлчĕ ĕнтĕ. Виçĕ çулта вара çĕнĕ кайăк пĕрре те килмен…

Ял лавккин çуртне 50 çул каялла эпĕ ял Канашне ертсе пынă вăхăтра суйлавçăсен наказĕсене пурнăçласа райпо укçипе кирпĕчрен купаланăччĕ. Виçĕм çул ăна тĕпрен юсаса çĕнетнишĕн райпо ертӳлĕхне чĕререн тав тăватпăр. Çакăн хыççăн лавкка тул енчен кăна мар, шалтан та илемленчĕ. Хăтлăхĕпе илес тĕк хуларинчен пĕрре те кая мар.

Ял çыннисене куллен кирлĕ таварпа тивĕçтерессишĕн тăрăшнă сутуçăсене палăртса хăвармаллах. Вĕсенчен хăшĕ-пĕри пирĕнтен яланлăх уйрăлса кайнă ĕнтĕ: Майдановсене, Порфирьевсене кирек хăçан та ырăпа аса илетпĕр. Халĕ ĕçлекен Светлана Васильева та çынсен ыйтăвĕсене туллин тивĕçтерме тăрăшать.

1976 çулта райпо çумĕнчи ятарлă шкула вĕренме кĕрсе суту-илӳ енĕпе хăнăху илнĕ хыççăн тăван ял лавккине килсе вырнаçнă та паян кунччĕнех кунта ĕçлет вăл. Çынсем ăна ырă кăмăлĕшĕн, тавара суйласа илме пулăшнăшăн хисеплеççĕ. Çемйи те кăтартуллă. Мăшăрĕпе Геннадий Васильевпа виçĕ ача çуратса ӳстернĕ, пурнăç çулĕ çине кăларнă. Муркаш районĕнчи Автанкассине качча тухнă хĕрĕ Наташа амăшĕн ĕçне малалла тăсать, вăл та – сутуçă.

Паллах, ялти лавккара ĕçлеме çăмăл мар, яваплăх та пысăк. Тепĕр чухне сăлтавсăрах кăмăла пăсакансем пулаççĕ. Светлана Александровна вара пуринпе те пĕр чĕлхе тупма тăрăшать.

Кăçалхи пуш уйăхĕнче вăл тивĕçлĕ канăва тухрĕ. Çавна май кунта ĕçлес шухăшлă маррине уççăнах пĕлтерчĕ. Тĕлĕнмелли çук – шалăвĕ пĕчĕк унăн. Хăш-пĕр уйăхра пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк виçерен те катăкрах. Светлана Васильевăна пенсие тивĕçлĕн ăсатăпăр-ха. Анчах...

Ялти лавккапа кулленхи пурнăç уйрăлми çыхăннă, вăл пире сывлăш пекех кирлĕ. Кунта малашне халăх ыйтăвне кам тивĕçтерессси вара пурне те шухăшлаттарать.

■ **Вениамин АРХИПОВ.** Элĕк районĕ, Мартынкасси ялĕ

*Ыйту-хурав*

## Юнри сахăр виçине тĕрĕслĕç

**Юнри сахăр виçине тĕрĕслес тĕллевпе ятарлă акци иртесси çинчен пĕлтĕм. Ку мероприяти пирки тĕплĕнрех каласа параймăр-ши?**

**З.ПЕТРОВА.**

ЧР Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерстви пĕлтернĕ тăрăх – Чăваш Ен тĕп хулинче пурăнакансем тата унăн хăнисем юнри сахăр виçине урамрах тĕрĕслеттерме пултараççĕ. Çак тĕллевпе 2014 çулхи çу уйăхĕн 12-14-мĕшĕсенче Шупашкарта "Сахăр чирĕ – сиплеме вăхăт" акци йĕркелеççĕ. Вăл виçĕ куна пырать. Республика лапамĕнче куллен 9.00-15.00 сехетсенче куçса çӳрекен диабет-центр ĕçлет, кăмăл тăвакансем унта юнри сахăр виçине палăртас тĕллевпе экспресс-тест витĕр тухма тата врач-эндокринолог консультацине илме пултараççĕ.

Акцие инвалидсен диабет обществин "ДиаС" организацийĕ "Профилактика – сывлăх никĕсĕ" информаципе çут ĕç проекчĕпе килĕшӳллĕн ирттерет.

Асăннă мероприяти тĕллевĕ – сахăр чирĕ пуçланнă тапхăртах малтанхи диагностика тăвас тĕлĕшпе обществăна тимлĕрех пулма ыйтасси.

Аса илтеретпĕр: асăннă амака вăй илтерекен теветкеллĕх сăлтавĕсем тĕрĕс мар апатланнипе, самăрлăхпа, сахал утса çӳренипе тата стреспа çыхăннă.

**Валентина СМИРНОВА хатĕрленĕ.**





Аслă Çĕнтерӳ





# «Хамран кăна мар, Севастопольтен – салам!»

***Вырăссем 1783 çулта никĕсленĕ çак крепоç тата тинĕс-çар порчĕ чи малтан 1854-1855 çулсенче Крым вăрçинче турккăсемпе вĕсен союзникĕсене хирĕç тăрса, кунта пурăнакан халăх паттăрлăхпа хăюлăх кăтартса чапа тухнă. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче вара Севастополь нимĕç фашисчĕсене парăнмасăр пĕтĕм тĕнчене тĕлĕнтернĕ. Хура тинĕс хĕрринчи шĕкĕр çак хула 1965 çулта Ленин орденĕпе «Ылтăн Çăлтăр» медале тивĕçнĕ, çапла майпа Украинăра Киев хыççăн иккĕмĕш геройхула пулса тăнă. Совет правительстви Севастополе çавăн пекех Хĕрлĕ Ялав тата Октябрь революцийĕн орденĕсемпе наградăланă.***

Мăнаçлă Севастополь герой-хулара ĕлĕкхи Чĕмпĕр кĕпĕрнин Улатăр уесĕн Кожевенное салинче 1918 çул вĕçĕнче çуралнă М.П.Бочкарев кунта çур ĕмĕре яхăн пурăнать ĕнтĕ. Вăл – Севастополь хулин тата Пăрачкав районĕн хисеплĕ гражданинĕ.

Ялти колхоз çамрăкĕсен шкулне пĕтернĕ хыççăн пурне те пĕлме юратакан Миша 13 çухрăмра, Сăр юхан шывĕн тепĕр енче вырнаçнă Пăрачкав вăтам шкулне вĕренме кайнă. Ăна 1937 çулта чи лайăх паллăсемпе пĕтернĕ хыççăн яштака, илемлĕ те вăйлă каччă Хусан университечĕн физикăпа математика факультетне кĕнĕ. Анчах та ăна пĕтерме май килмен: тепĕр икĕ çултан Кожевенное каччине Пĕтĕм Союзри комсомол путевкипе Тутар АССР тĕп хулинчен Ленинградри М.В.Фрунзе ячĕллĕ тинĕс-çар аслă училищине ăсатнă. Унта ăна тӳрех иккĕмĕш курса йышăннă. Çапла майпа килте тата вырăнти «Засурский» хуçалăхра ĕçлесе пиçĕхнĕ, спортăн нумай енĕпе Пăрачкав районĕн чемпионĕ хăйĕн малашнехи пурнăçне – унтанпа кăçал 75 çул çитет – çар флочĕпе çыхăнтарать.

Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи пуçлансан Нева хĕрринчи тинĕс-çар училищин курсантсен ротине вăхăтлăха Баку хулине куçарнă. Кĕркунне вĕçĕнчех Бочкаревăн çар хĕсмечĕ Каспи çар флотилийĕнче пуçланать. Кунтах çамрăк офицера капитан-лейтенант званине параççĕ. Вăрçă хыççăн пирĕн ентеше Çурçĕр флочĕн штабне куçараççĕ. Кунта Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче паттăрлăхпа хăюлăх кăтартса ултă çар орденĕпе медальне тивĕçнĕ Михаил Бочкарев 1-мĕш рангри капитан таран ӳсет.

1957 çулта пирĕн мухтавлă ентеше, Мускаври К.Е.Ворошилов ячĕллĕ тинĕс-çар академине хĕрлĕ дипломпа пĕтернĕскере, Польшăна тинĕс-çар ĕçĕсен канашçин тивĕçĕсене пурнăçлама янă. Тепĕр икĕ çултан Михаил Павлович – Хура тинĕс флочĕн çар карапĕсен бригадин командирĕ. Тепĕр вунă çултан М.П.Бочкарев контр-адмирал Хĕрлĕ Ялавлă Хура тинĕс флочĕн командующийĕн çумĕ пулса тăрать. Урăхла каласан – чăн-чăн «тинĕс кашкăрĕ».

1980 çулсенче тивĕçлĕ канăва тухнă хыççăн Михаил Павлович Чăваш Ене час-часах килме пуçларĕ. Вăтăр çул каяллах ăна Пăрачкаври вăтам шкулта хисеплĕ пионера илчĕç. 1988 çулхи авăн уйăхĕнче Шупашкара килсен хулари тинĕс-çар флочĕн ветеранĕсемпе тĕл пулчĕ, «Олимпийский» стадионта пуçланнă ухăçăсен Пĕтĕм Союзри ăмăртăвне тата 29-мĕш вăтам шкулта уçăлнă Çар Мухтавĕн музейне çитсе курчĕ.

М.П.Бочкарев отставкăри контр-адмирал чĕрĕк ĕмĕре яхăн Севастопольти флот офицерĕсен çурчĕ çумĕнчи çар ăслăлăхĕн канашне ертсе пырать. Тĕлĕнмелли çук, пирĕн ентеш герой-хулари чи сумлă çынсен ретĕнче.

Пăшăрханмалли самант та сахал мар пулнă унăн пурнăçĕнче. Михаил Павлович 1991 çулта Крым пĕтĕмпех çĕнĕрен «çуралнă» Украина çĕр-шывне куçнăшăн самай куляннă. Совет правительствин тăхăр çар орденне тата çирĕм медальне тивĕçнĕ Севастополĕн хисеплĕ гражданинĕн чĕрине юлашки çулсенче бандеровецсемпе неофашистсем пуç çĕклени ыраттарнă. Тахçанах Украинăра тĕпленнĕ пулин те М.П.Бочкарев хăйне яланах Раççей гражданинĕ тесе шухăшланă. Икĕ çул ытларах каялла вăл РФ Президенчĕ В.Путин патне çыру çырнă, унран хăйне Раççей паспорчĕ пама ыйтнă. Часах пирĕн ентеш-патриотăн ыйтăвне тивĕçтернĕ Владимир Владимирович. 2012 çулхи ака уйăхĕн 20-мĕшĕнче Раççей Федерацийĕн правительствин Симферопольти генеральнăй консулĕ В.Андреев савăнăçлă самантра Михаил Павловича Раççей гражданинĕн хаклă документне панă. Массăллă информаци хатĕрĕсем пĕлтернĕ тăрăх – паянччен Крымра çур миллион ытла çын Раççей паспортне илнĕ.



● М.П.Бочкарев Пăрачкаври шкул ачисемпе пĕрле /1988 çул/.

Çĕнтерӳ кунĕ умĕн Михаил Павловичпа телефонпа çыхăнтăмăр, чи малтан ăна Аслă Çĕнтерӳ уявĕпе пĕтĕм кăмăлтан саламларăмăр.

– Тавтапуç, таймапуç мана чи пысăк уяв ячĕпе саламланăшăн! Ĕнер кăна акă Шупашкарти Пăрачкавсен ентешлĕхĕн ертӳçинчен Николай Васильевичран бандероль тата Пăрачкаври шкултан саламлă телеграмма илтĕм, питĕ савăнтăм. Вĕсем маншăн чи сиплĕ эмел вырăннех. Эппин, Çĕнтерĕвĕн 70 çулхи юбилейĕччен кăна мар, 100 çула çитиччен те пурăнасчĕ. Хаклă та хисеплĕ Чăваш Ене хамран кăна мар, мирлĕ Севастопольтен пысăк салам! Уяв ячĕпе! – тесе вĕçлерĕ калаçăва 95 çулти контр-адмирал.

Юлашки чĕрĕк ĕмĕре илес пулсан, кăçалхи çу уйăхĕн 9-мĕшĕнче Аслă Çĕнтерӳ уявне Севастопольте нихăçанхинчен те анлă паллă тунă. Шăп çак кунсенче II Екатерина императрица вăхăтĕнче никĕсленĕ вырăс мухтавĕн хулине, çавăн пекех Крыма нимĕç фашисчĕсенчен хăтарнăранпа 70 çул çитрĕ.

Раççей Президенчĕ В.Путин Çĕнтерӳ кунĕнче Хура тинĕс хĕрринчи чи паллă герой-хулана 15 сехетре килсе çитнĕ. Тепĕр сехетренех Владимир Владимирович Нахимов адмирал ячĕллĕ Тĕп тӳремре Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче Севастополе ирĕке кăларнăранпа 70 çул çитнине халалланă савăнăçлă митинга хутшăннă.

Çĕр-шыв пуçлăхĕ кунта малтанах тĕнче вăрçинче уйрăмах палăрнă ветерансене ăшшăн саламланă, унтан Хура тинĕс хĕрринчи ĕмĕр сӳнми çулăм умне чечек кăшăлĕ хунă. Унтан М.Бочкарев контр-адмиралпа тĕл пулнă. Иртнипе хальхи пурнăç çинчен калаçнă.

■ **Петр СИДОРОВ.**

Автор архивĕнчи сăн ӳкерчĕк

## Çак сăвăсене Чăваш халăх поэчĕ Ухсай Яккăвĕ 1941 çулхи çулла фронтра çырнă. Вĕсем ниçта та пичетленмен



### Пирĕн летчик тапăнать

Пилĕк пăнчă аякра, –
Пиллĕкĕш те хуп-хура.

Шурă пĕлĕт хушшинче
Пирĕн летчик пĕр пĕччен.

Шикленмест вăл пĕр пĕччен –
Пĕтĕм халăх чĕринче.

Пĕтĕм халăх çĕкленсен,
Хирĕлеççĕ тăшмансем.

Харсăр хурчăка пекех
Тапăнать вăл пиллĕке.

Каллĕ-маллĕ вăркăнать –
Пиллĕкĕш те кĕл кăна.

Вилнĕ сурăх çăмĕ пек
Кĕл вĕçет çĕр çумĕпе.

### Уйăх витĕр уй куратпăр

Уйăх витĕр уй куратпăр:
Хамăр уйăмăр хура.
Хăйĕн вилĕмне туймасăр
Килнĕ сĕмсĕр вăр-хурах.

Кĕмĕл пек таса шап-шурă
Пысăк уйăх çуттине
Кам пĕлет тăшманăн мурĕ
Таптаса хуратнине?

Пăшалпа персе илеймĕн
Пирĕн çутă уйăха;
Асапа тытса кĕртеймĕн
Пирĕн аслă халăха.

Уйăх витĕр уй куратпăр:
Хамăр уйăмăр таса.
Пĕтĕм халăхпа пыратпăр
Тăшманран тусан туса.

Уйăх витĕр çул куратпăр:
Çулăмăр каять инçе:
Халăхăн ялавĕ паттăр
Вĕлкĕшет тĕнче çинче.

### Кĕлленнĕ ял

I

Кунта ĕнер илемлĕ ялччĕ,
Йĕри-тавра кăтра йăмраччĕ.

Ирхи тĕтре çĕкленнĕ майăн
Вăрман тулли юрлатчĕ кайăк.

Тапса юхатчĕ çăл валакĕ,
Янратчĕ çамрăксен такмакĕ.

Уй-хир пек сарлака хаваслăх
Туйса, хĕрӳ ĕçлетчĕ халăх.

II

Паян ял вырăнĕ çара,
Çунса кĕлленнĕ, хуп-хура.

Чавка-курак та халь кунтан
Тарса пытаннă вăрманта.

Çилсем кăварлăн хускалсан,
Çул тăрăх варкăшать тусан.

Ачи-пăчи вилли çинчен
Çилсем иртеççĕ-ха, кичем.

Тăшманăн мăшкăлне курса
Хĕрсем йĕреççĕ татăлса.

Тăрăшса хĕрсем ĕçленĕ.
Улăх утине çисен

Тăшмана ирсе кĕçенĕç
Хĕрлĕ Çарăн лашисем.

### Хĕрсем утă çулаççĕ

Хĕрсем утă çулаççĕ
Аслă Атăл хĕрринче.
Паккуссем катрам выртаççĕ
Пĕтĕм халăх умĕнче.

Пăшалсем пек ялтăраççĕ
Хурçă çивĕч çавасем,
Ай, танксем пек хăпараççĕ –
Пысăк йĕкĕр капансем.

Пилĕк çӳллĕш ӳснĕ курăк
Вăштăр-вăштăр силленсен,
Ĕнесем – хăймаллă турăх,
Çăм параççĕ сурăхсем.

Тарласа çулать бригада,
Вылятать çависене:
Тутлă турăх та кăçатă
Парăпăр паттăрсене.

Шурă пĕлĕт хушшинче
Пирĕн летчик пĕр пĕччен.
Хурчăка пек яр кăна
Каллĕ маллĕ ярăнать.

Тепĕр пиллĕкĕш хăçан
Килессе кĕтет паян.

# Кашнинчех шăпа хĕрхеннĕ

***Вăхăт пĕр чарăнусăр чупать. Никама та пăхăнмасть вăл. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине хутшăнса, Аслă Çĕнтерĕве çывхартассишĕн паттăррăн çапăçнă çынсем те яланлăхах уйрăлса каяççĕ пирĕнтен. Çултан-çул мар, уйăхран уйăха чакса пырать вĕсен йышĕ.***

Çав вăрçăра алла пăшал тытса çапăçнă ветеран, Йĕпреç поселокĕнче пурăнакан Яков Петрович Глякин, хăрушă тапхăрăн кашни самантне питĕ лайăх ас тăвать. 3-мĕшпе 2-мĕш пусăмри Мухтав орденĕн кавалерĕн ытти чыс-сум палли те çук мар. Хăй каланă тăрăх – вăл «Будапешта илнĕшĕн» медале пуринчен те маларах хурать-мĕн. «Мĕншĕн?» – тесе ыйтсан кĕскен çапла хурав илтрĕм унран: «Çав хулашăн пынă çапăçусенче пĕр полкри чи çывăх тус-юлташăма çухатрăм. Ăна та «Будапешта илнĕшĕн» медальпе вилнĕ хыççăн чысларĕç. Шел те, çав медале панă чухне тухса илекен пулмарĕ. Комиссар йышлă салтак умĕнче ăна мана тыттарчĕ. Эпĕ Пенза облаçĕнчи мăшăрне ярса патăм...»

Яков Петрович хăйĕн калаçăвне малалла тăсрĕ: «Ыттисенчен нимĕнпех те уйрălса тăман, тăшмана хăвăртрах çапса çĕмĕрес тесе вилĕмрен хăрамасăр çапăçнă кăна». Анчах унăн шухăшĕпе пĕтĕмпех килĕшес килмест манăн. Ара, разведчик пулнă салтак фашистсене çĕнтерес тĕллевпе хăйĕн тивĕçлĕ тӳпине хывнă-çке. Вăл çулăмлă çулсен мĕн пур йывăрлăхĕпе асапне хăй çине илсе тăвата çула яхăнах тăсăлнă вăрçăра «чĕлхе» тытма тăшманăн чи шалти тылне кайма та шикленмен. Кашнинчех шăпа хĕрхеннĕ ăна, вăл тĕрĕс-тĕкелех таврăннă.

Акă паттăр салтакăн пĕр аса илĕвĕнчен илнĕ йĕркесем: «Пире, сывă та тĕреклĕ 6 çамрăка, «чĕлхе» тытма янăччĕ. Çул хĕрринчи тĕмсен хыçне пытанса тăтăмăр. Тăшман колонни иртсе пыратчĕ. Пĕрисем чылай мала кайнăччĕ. Малтисем пур тăк кайрисем те пулмаллах ĕнтĕ. Эпир шухăшлани тӳрре тухрĕ. Тепĕр 200 метртан пĕр-пĕринпе сăмахласа пыракан икĕ фашист курăнчĕç. Тӳрех вĕсем çине сиксе ӳкрĕмĕр. Çак ĕçе питĕ хăвăрт та шăв-шавсăр тумалла. Унсăрăн малтисем сисме пултараççĕ. Сасартăк пĕр фрицĕ пирĕн енне граната ывăтма ĕлкĕрчĕ. Анчах пирĕн ушкăнри пĕр разведчик çухалса каймарĕ, сывлăшри гранатăна аллипе ярса илсе тӳрех çул айккинелле вăркăнтарчĕ. Çапла эпир пурте сывă тăрса юлтăмăр.

Çул çинче пире тепĕр тĕл пулу та кĕтсе тăнă иккен. Каç пулттипе икĕ юлан утçăна асăрхарăмăр. Кусем «чĕнмен хăнасем» пулни паллăччĕ. Анчах вĕсем патне хăш енчен пымалла-ха? Шăв-шав тумасăр май çук, тӳрех граната ывăтрăмăр, пĕр лашин ури çавăнтах татăлса ӳкрĕ, тепĕр юлан утçи вара пирĕнтен тарса кайма пултарчĕ. Эпир тӳрех ӳкнĕ юлан утçă патне чупрăмăр. Вăл аманман та: эпир çитиччен çывăхри катана кĕрсе çухалма та ĕлкĕрчĕ.

Вилнĕ ут çинчи йĕнере тĕрĕслес терĕмĕр. Пирĕн телее, куç тĕлне планшет лекрĕ, ăна штаба илсе çитертĕмĕр. Офицерсем планшетран темĕнле документсем туртса кăларсан тĕлĕнтĕмĕр мар-и? Ара, разведчиксене питех те кирлĕ хыпарсем пулнă унта».

Яков Глякин Йĕпреçри пĕрремĕш вăтам шкултан 1941 çулхи çĕртме уйăхĕн 15-мĕшĕнче вĕренсе тухнă. Тепĕр эрнерен вăрçă пуçланнă. Смоленскри çар училищине васкавлă йĕркепе пĕтернĕ курсанта 1942 çулхи çурла уйăхĕнче фронта янă. Пирĕн ентеш Воронеж облаçĕнчи Бобров районне кĕрекен пĕр станицăшăн пынă çапăçăва пĕрремĕш хут хутшăнсах хăюлăх кăтартнă. Ăна «Çапăçури хастарлăхшăн» медальпе наградăланă.

Салтак каярахпа Сталинградпа Курск пĕккинчи çапăçусенчен пиçĕхсе тухнă, тăшмана Корсунь-Шевченко тата Яссы-Кишинев хутлăхĕсенче аркатнă. Виçĕ хутчен аманса госпитальсенче сипленме тивнĕ унăн.

Тахçантанпах кĕтнĕ Çĕнтерӳ кунне вăл Чехословаки çĕрĕ çинче паллă тунă. «Воронеж облаçĕнчи Дон юхан шывĕ хĕрринчен пуçласа Прага хулине çити çапăçусемпе утса тухнă дивизие Будапешт ятне панă, – аса илет ветеран. – Çак хулана ирĕке кăларма хутшăннă салтаксене пурне те, çав шутра – пуç хунисене те, «Будапешта илнĕшĕн» медальпе чысларĕç».

Яков Глякин хĕсметре тăнă мотострелоксен Хĕрлĕ Ялав, Суворов, Богдан Хмельницкий орденĕсен Синельниково-Будапешт гварди дивизийĕ пирĕн ентеш Чапаев ячĕпе хисепленсе тăнă. Çакă та салтакăн хастарлăхне хăпартма пулăшнах ĕнтĕ.

Çак йĕркесен авторĕ Яков Петровича «ентеш» тесе чĕннĕшĕн вăл кӳренместех пулĕ. Ара, вăл Пенза облаçне кĕрекен Соколовка ятлă вырăс ялĕнче çуралнă-çке. Çемье 1933 çулта Йĕпреç поселокне куçса килнĕ. Пĕлтĕр вăл харăсах икĕ юбилее – Йĕпреçре тĕпленнĕренпе 80 çул çитнине, тепри – хăй çуралнăранпа 90 çул тултарнине – паллă турĕ.

Вăрçă хыççăн çар орденĕсемпе медалĕсен кавалерĕ Йĕпреçе таврăннă. Районти потребительсен союзĕнче товароведра тата склад пуçлăхĕнче ĕçленĕ. Унăн пурнăçĕнчи тепĕр паллă тапхăр вăл – Казахстанри Байконур космодромне тăвакансен пĕрремĕш йышĕнче пулни. Тивĕçе чыслăн пурнăçланă хыççăн Яков Петрович каллех тăван кĕтес пек çывăх пулса тăнă Йĕпреçе килсе çитнĕ, общество апатланăвĕнче, строительствăпа монтаж участокĕнче, ОРСра 39 çул тăрăшнă.

Яков Петровичпа унăн мăшăрĕ Чул хула облаçĕнчи Воротынец районĕнче çуралса ӳснĕ Валентина Александровна икĕ ачана пурнăç панă: Владимирпа Сергей иккĕшĕ те – врач-хирург. Асли Хусанта, кĕçĕнни Шупашкарта «тымар» янă.

Питех те шел, юратнă мăшăрĕ темиçе çул каялла çут тĕнчерен уйрăлнă. Йĕпреçри пĕрремĕш вăтам шкултан вĕренсе тухнисем ырă кăмăллă физкультура вĕрентекенне ăшшăн аса илеççĕ.

Яков Петровича тăхăр вуннăран иртнĕ тесе калаймăн. «Манăн анне, тăвата ача çуратса ӳстернĕскер, 103 çула çитиччен пурăннă, – тет вăл. – Тура мана та вăрăм ĕмĕр паринччĕ. Чун-чĕрере çирĕплĕхпе тӳсĕмлĕхĕн шанчăклă саппасĕ пур пек туйăнать». Çапла пултăрччĕ.

■ **Геннадий КУЗНЕЦОВ**

# Салтак аттине çичĕ çул хывман

***Патăрьел районĕнчи Тăрăнта пурăнакан Николай Крылов вăрçă ветеранĕпе тĕл пулсанах куç умне ватă асаттепе кукаçин сăнĕсем тухса тăчĕç: иккĕшĕ те кĕреçе сухаллă...***

Микула пиччен те вата çыннăн мăнаçлăх палли самай пуян: çăра та, вăрăм та, шуралнă та. Мĕн тесен те салтак тепĕр икĕ çултан тăхăр вуннă тултарать-çке! Хура-шурне самай курма вăхăчĕ çитеĕклех темелле. Çулĕ шултăраланса пынăçемĕн вара пичĕ çинчи пурнăç паллисем те йышланнă, алли-ури те тукмакланнă, курпунĕ те палăрать.

Коля каччă чухне те яштак йĕкĕтех пулман иккен. Калаçу пуçламăшĕнче кун пирки вăл шӳтлĕрех те аса илчĕ.

– Салтак чупма кайсан эпир хамăр ушкăнпа пулас арăм килне те кĕнĕ иккен. Асламăшĕ ман çине пӳрнипе тĕллесе ыйтнине паянхи пекех лайăх ас тăватăп: «Ак ку, пĕчĕкки, тата камсен-ха? Вăл та салтака каять-и?» – терĕ тĕлĕнсе. Ара, эпĕ ун чухне ыттисенчен уйрăлса тăни каламасăрах паллă ĕнтĕ. Çӳллĕшпе – метр çурă, йывăрăшпа – 48 килограмм... – сухал айĕнче кулчĕ ватă.

Çапах та вун çиччĕри каччă Тăван çĕр-шыва хӳтĕлеме шанса панă пăшала ыттисемпе танах кăкăр çумĕнче çирĕппĕн тытнă. 1943 çулхи чӳк уйăхĕнче ялтан харăсах вун çичĕ каччăна тăван-пĕтенĕ уй хапхинчен вăрçа кăларса янă.

– Вăрнара лашапа шăп та лăп икĕ талăк кайрăмăр. Ултă уйăх «полтинник» текен миномет вăрттăнлăхне вĕрентнĕ хыççăн алла вĕр çĕнĕ винтовка тыттарчĕç, – синкерлĕ вăхăтсене пĕрин хыççăн теприне куç умне кăларчĕ ветеран.

Салтакăн тарлă аттине хывмасăр çичĕ çул тăхăнма тивнĕ унăн! Вĕрентӳ хыççăн вăл ыттисемпе пĕрлех Виççĕмĕш Прибалтика фронтне лекет. Штурмлакан батальонта разведкăн йывăр ĕçĕсене епле пурнăçланине паян кун та манмасть. «Çук» текен сăмах салтаксемшĕн пулман. Латвири пĕр чиркӳ çывăхĕнче иртнĕ хĕрӳ çапăçура Николая командир патне штаба çыру çитерме хушсан та вăл çăмăллăн çеç аллине тăнлав çывăхне тытнă. Нушаллă пулсан та хушнине ăнăçлă пурнăçланă. Шăпах çакăн чухне вăл штаб командирĕпе çывăх паллашать. Ырханкка та шуранка чăваш каччи вырăсла лайăх сыпăнтарса калаçайманнине лешĕ çийĕнчех сиснĕ-тĕр. Тӳрех салтак ăçтан пулнине ыйтать. Николай Чăваш çĕршывĕнчен иккенне пĕлсен командир ăна ыталасах илет. Çапла паллашса каяççĕ аякри вăрçă хирĕнче Улатăр вырăсĕпе Тăрăн чăвашĕ. Ун чухне туслашнă юлташ вăртахран та хаклăрах. Вăл ăна хăй патне чĕнсе кантарнă, апатлантарнă... Ун хыççăн вара вĕсем урăх курнăçман.

Пĕр çапăçура йывăр аманнă хыççăн Николай Владимировичăн госпитальте выртса сипленме тивнĕ. Тĕрĕссипе, чылай салтак ун витĕр тухнă темелле. Хул суранĕ вăхăтра пирченĕ, ăна офицерсен шкулне вĕренме яма хатĕрленĕ. Анчах шăпа тени урăхла çаврăнса тухнă. Çĕнтерӳ кунĕ хыççăн аманнисене хăйсен чаçне чĕнсе илнĕ те саппасри пиллĕкмĕш полка хĕсмете тăсма янă. «Туянакансем» килсенех салтаксене Луга хулине топографа вĕренме ăсатнă. Кунта вара тепĕр çулталăк иртнĕ. 1948 çулта Николай Владимирович Ленинграда пĕлĕвне малалла тăсма наука тĕпчев институтне килнĕ. Кунта икĕ çул топографсен уйрăмĕн командирĕ пулать. Аллăмĕш çулта çеç тăван яла таврăнать.



● Н.Крылов вăрçă ветеранĕ.

Салтак аттине хывнă хыççăн хĕрĕх ултă çул тĕрлĕ вырăнта ĕçленĕ. Чи нумай опыт пухни вара çул-йĕр юсакан участокра: мастер, техник, инженер... Шур сухал калашле, участок ертӳçинче çеç ĕçлеме ĕлкĕреймен.

Хальхи вăхăтра Н.Крылов ветеран сывлăх тĕлĕшĕнчен йăшнă пулин те хавхаланăвĕ пысăк-ха. Мăнукĕсен, вĕсен ачисен савăнăçĕпе, çитĕнĕвĕпе киленсе пурăнни вăй хушать ветерана.

■ **Альбина ЕГОРОВА.**

Автор сăн ӳкерчĕкĕ

# Вĕсем Ленинграда хӳтĕленĕ

Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин малтанхи эрнисенчех нимĕç фашисчĕсем Ленинграда вăйлă тапăнма пуçланă. Тăшмана çапса аркатмалла, оборонăна кунĕн-çĕрĕн çирĕплетмелле, Ленинграда блокадăран хăвăртрах хăтармалла – çапла тĕллев лартрĕ Совет Çарĕн командованийĕ Ленинград тата Волхов фрончĕсенчи салтаксемпе офицерсен, хулари ĕç коллективĕсен умне. Çакна пурнăçласа тинĕс пехотин уйрăм ултă бригадине, стрелоксен пилĕк бригадине тата икĕ дивизине, халăх ополченийĕн вунă дивизине, артиллерине пулеметсен вун ултă уйрăм батальонне тунă. Невская Дубровка, Шлиссельбург /халĕ Петрокрепость/, Пушкин, Слуцк, Мга, Колпино хулисемшĕн, Синявино поселокĕшĕн уйрăмах хаяр çапăçу пынă.

1942 çулхи ака уйăхĕнче Волхов фронтне Златоустри çар инженерĕсем хатĕрлекен училищĕрен вĕренсе тухнă çамрăк офицерсем, вăтăр çынна яхăн, çитрĕç. Вĕсене полксемпе бригадăсенчи, уйрăм батальонсенчи сапер взвочĕсен командирĕсем пулма çирĕплетрĕç. Çамрăк специалистсем ĕçе çийĕнчех тытăнчĕç. Тăшман танкĕсен çулне пӳлсе лартас тĕллевпе вăрмансенчи йывăççене касса чăрмавсем турĕç. Кашнин сарлакăшĕ 25-30 метра яхăн, тăршшĕ – тĕрлĕрен: çĕр метртан пуçласа темиçе километр таран.

Нева тата Волхов таврашĕнче пĕчĕк юхан шыв тата шурлăх нумай. Командовани приказ пачĕ: пĕчĕк юхан шывсене пӳлес, шыв тарăнăшне 180-200 сантиметра çитерес. Плотинасене чултан турăмăр. Шыв тулса таврана сарăлчĕ, тăшман танкĕсемпе пехотине малалла куçма чарчĕ.

Паллă ĕнтĕ, тăшман пульлисемпе снаряд ванчăкĕсенчен хӳтĕленме окопсемпе траншейăсем, блиндажсем кирлĕ. Кĕреçепе чавма тытăннă-тытăнманах шыв тухнă пирки окопсемпе траншейăсем вырăнне пĕренесенчен хӳтлĕхсем /сапурсем/ тăваттăмăр.

1942 çулхи çурла уйăхĕн варринче пирĕн 861-мĕш полка 54-мĕш çар командующийĕ А.В.Сухомлин генерал-лейтенант килчĕ. Чи малтанах вăл стрелоксен ротисенче рядовой салтаксемпе сержантсем хăйсен тивĕçне мĕнле пурнăçланипе интересленчĕ. Офицерсемпе калаçу иртнерĕ чухне çакă паллă пулчĕ: полк штабĕнче ĕçлекенсем ротăсемпе взводсен командирĕсен çар званийĕсене ӳстерсе пымалли йĕркене çирĕп пурнăçламанни те пулнă. Командарм çак çитменлĕхе хăвăртрах пĕтерме хушрĕ. Çар командующийĕ Ленинграда блокадăран хăтарма мĕнле хатĕрленмелли çинчен тĕплĕн каласа пачĕ, «Вăрманлă-шурлăхлă вырăнта тăшман оборонине мĕнле çĕмĕрсе тăкмалла» темăпа занятии ирттерчĕ.

Ленинграда нимĕç фашисчĕсенчен хӳтĕлеме пĕтĕм çĕр-шыв хутшăнчĕ. Дивизисемпе бригадăсенчи подразделенисенче чăвашсем те йышлăччĕ. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Пĕччен Хыр ялĕнче çуралнă А.Иванов минометчик Мга станцийĕ патĕнчи çапăçусенче паттăрлăхпа палăрнă, ăна III степень Мухтав орденĕпе наградăланă. Вăрçă хыççăн А.Иванова, хастар та пултаруллă çамрăка, ВЛКСМ Чăваш обкомĕн пĕрремĕш секретарьне суйларĕç. Вăрçăччен М.Сироткин Шупашкарти педагогика училищинче ĕçлерĕ. Фронтра та вăл воспитани ĕçне тимлĕ пурнăçласа пынă – миномет бригадинчи паллă политрук пулнă. Çапăçусенчи паттăрлăхшăн, мирлĕ ĕçри çитĕнӳсемшĕн ăна Хĕрлĕ Çăлтăр тата Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕсемпе наградăланă.

Федор Александрович Ситова вăтăрмĕш çулсенчи пионерсем – хальхи шур сухаллă мучисемпе хисеплĕ кинемейсем – лайăх ас тăваççĕ пулĕ. Çав çулсенче вăл «Пионер сасси» хаçат редакцийĕнче ĕçлетчĕ, шкулсенче час-часах пулатчĕ. Çар хĕсметне тăрсан ăна, талантлă журналиста, дивизири «Защитник Родины» хаçат редакторĕ пулма çирĕплетнĕ. Хаçат салтаксемпе офицерсене нимĕç фашисчĕсене çапса аркатма, Ленинград блокадине хăвăртрах тата тĕппипех сирсе яма мобилизациленĕ.

Вăрçă хыççăн республикăри хаçатсен редакцийĕсенче нумай çул ĕçленĕ Маргарита Ивановна Иванова фронтра 123-мĕш çыхăну полкĕнче телеграфистка пулнă. Вăл çар /арми/ штабĕ дивизисемпе, бригадăсемпе, полксемпе тытакан çыхăнăва тивĕçлĕ шайра йĕркелесе пынă. Паттăрлăхпа хăюлăхшăн ăна II степень Тăван çĕр-шыв вăрçин орденĕпе, «Çапăçури тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн» медальпе наградăланă.

Вăрçăччен Шупашкарти 1-мĕш типографи директорĕнче ĕçленĕ Михаил Прокопьевич Ижеев Ленинград фронтĕнче пулемет ротине ертсе пынă. Вăрмар районĕнче çуралнă Василий Степанович Алентей учитель нумай çапăçура паттăрлăх кăтартнă. Мирлĕ пурнăçра талантлă журналист тата Чăваш халăх писателĕ пулса тăчĕ.

Ленинграда нимĕç фашисчĕсенчен хӳтĕлеме хăйсен пĕтĕм хастарлăхне панă паттăрсене халăх нихăçан та манмĕ.

■ **Анатолий СЕМЕНОВ,**

**Волхов фрончĕн ветеранĕ, отставкăри подполковник**

# Сиплевçĕ

## Çум курăк пулин те

Çуркунне çум курăксем – халха çакки курăкĕ, хупах, вĕлтрен – чи малтан шăтса тухаççĕ. Пахчара сарăлса ан кайччăр тесе хăвăртрах кĕреçе-катмак ярса тытатпăр, тĕпĕ-тымарĕпе кăклама тăрăшатпăр. Çапах та çак курăксем – чăн-чăн витамин çӳпçи. Вĕсенчен тутлă яшка, салатсем хатĕрлеме пулать. Уйрăмах вĕлтрен паха.

300 грамм вĕлтрен илмелле, вĕри шыва 2-3 минутлăха ямалла, дуршлаг çине хумалла, шывĕ сăрхăнсан вĕтĕ турамалла. 100 грамм укропа, 8 шăл ыхрана вĕтетмелле, 200 грамм йогурт хушмалла, вĕлтренпе пĕрле пăтратмалла. Тăвар сапмалла, пĕçернĕ çăмартапа илемлетмелле. Ашпа, пулăпа çиме аван.

Çурхи кунсенче пире пурне те витамин çитмест. Организма вĕлтрен чейĕ çирĕплетет. 2 апат кашăкĕ типĕтнĕ вĕлтрене вĕренĕ 2 литр шыва 30-50 минутлăха ярса лартмалла. Çакнашкал чее темиçе уйăх ĕçсен çын хăйне çĕнĕрен çуралнă пекех туять. Вĕлтрен чейĕ юна, пӳрене тасатать, пыршăлăха, амалăха лайăхрах ĕçлеме пулăшать.

Ĕçме хатĕрлеме типĕтнĕ е тин татнă вĕлтрен çулçипе усă курма юрать. Улма-çырла, шăлан е кĕтмел, апельсин е лимон хушса вĕретсен пушшех те усăллă.

Çуркунне пуç кĕçĕтме пуçласан, çӳç лĕкĕленсен те вĕлтренсĕр май çук. Вĕлтрен шывĕ çӳç тытăмне лайăхлатать, ăна хăвăрт ӳсме пулăшать. Çак тĕллевпе вĕлтренпе çуркунне кăна мар, çулталăкăн кирек хăш вăхăтĕнче те усă курма пулать.

100 грамм вĕлтрене /типĕтни те, халь татни те юрать/ 1 литр шыва ямалла, 6 процентлă пан улми уксусĕ çур литр хушмалла. Вăрах çулăм çинче çур сехет вĕретмелле, сăрăхтармалла. Ăшă шыв янă таза 2-3 стакан вĕлтрен шывĕ хушмалла. Çӳçе шампуньсĕрех çумалла. Пĕр уйăх кашни кунах вĕлтрен шывĕпе чӳхемелле. Хĕллехи вăхăтра вĕлтренĕн спиртри шĕвекĕ лайăх. Çу уйăхĕнче пухнă курăка тĕттĕм тĕслĕ кĕленче савăта хумалла. Шурă эрех ямалла, çутă лекмен вырăнта пĕр уйăх тытмалла. Сăрăхтармалла, кĕленче савăта ярса сивĕтмĕшре упрамалла. Настойкăна çӳçе чӳхемелли шыва хушмалла /1:4 виçепе илмелле/.

Çак шĕвек çӳç тăкăнасран та пулăшать. Унпа пуç ӳтне сăтăрмалла.

Вĕлтрен çулçине çуркунне вĕçĕнче – çу пуçламăшĕнче типĕ çанталăкра пухмалла. Ăна 10 кун типĕтмелле. Типĕтнĕ чĕр тавара хут хутаççенче çутă лекмен вырăнта упрамалла.

## Юн тымарĕсене тасатма

100-шер грамм шур чечеке /ромашка/, сар çип утине /зверобой/, тăкăнман чечеке /бессмертник/, хурăн кăчкине хутăштармалла. Кĕленче савăта хурса хупламалла. Каçхине 1 апат кашăкĕ хутăша 20 минутлăха вĕренĕ çур литр шыва ямалла. Пусма витĕр /марльăпа усă курма кирлĕ мар/ сăрăхтармалла. 1 стакан шĕвекре 1 чей кашăкĕ пыл ирĕлтермелле, çывăрма выртас умĕн ĕçмелле, çакăн хыççăн çиме те, ĕçме те юрамасть. Ирхине юлнă шĕвеке ăшăтмалла, 1 чей кашăкĕ пыл ярса ирĕлтермелле, ирхи апатчен 15-20 минут маларах ĕçмелле. Хутăш пĕтиччен кашни кунах çапла сипленмелле. 5 çул иртсен юн тымарĕсене тепĕр хут тасатма юрать.

Сипленнĕ май япаласен ылмашăвĕ лайăхланать, юн тымарĕсем тасалаççĕ, пиçĕленеççĕ. Çакă склероз, гипертони чирĕсем аталанасран, инфаркт пуласран сыхлать, пуç шавлама, çаврăнма чарăнать.

## Нерв тытăмĕ хавшасан

● 1 апат кашăкĕ укроп вăррине вĕренĕ стакан çурă шыва ямалла. Хытă пăлхансан, ыйхă çĕтсен çуршар стакан ĕçмелле.

● 1 чей кашăкĕ мулкач курăкне /тысячелистник/ вĕренĕ 1 стакан шыва çур сехетлĕхе ямалла. Стаканăн пĕрре виççĕмĕш пайне ĕçмелле.

● 2 эрнере пĕр хут çывăрма выртас умĕн тăварлă шывра йĕпетнĕ, лайăх пăрнă кĕпе тăхăнса выртмалла. Ăшă утиялпа чĕркенмелле. Кĕпе ӳт çинче типиччченех выртмалла. Ун хыççăн ал шăллипе шăлăнмалла, типĕ кĕпе тăхăнмалла, çывăрма выртмалла. Çакăн пек сипленнĕ чухне организмран сиенлĕ япаласем тухаççĕ. Çавăн пекех нерв тытăмĕ хавшасан чирлисен кашни кунах ирсерен сивĕ шывпа йĕпетнĕ ал шăллипе сăтăрăнмалла.

## Усăллă канашсем

● Шăмă сыппиcемпе мышцăсене пулăшма чи малтанах ытлашши виçерен хăтăлмалла;

● сĕт ĕçмелле, сĕт юр-варĕ, тинĕс пулли çимелле;

● нумайрах çӳремелле. Чир-чĕр ытларах чухне урараn пуçланать, çавăнпа урасемшĕн, çурăм шăммишĕн, шăмă сыппиcемшĕн хусканусем час-часах туни уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ;

● хытă матрас çинче çывăрмалла;

● пӳрнесене пĕрмаях ĕçлеттермелле – алла çаврашка, мăйăр тытса вылямалла, çăмăлах мар ĕç те тумалла, ӳсĕме, сывлăха кура хастарлăх кăтартмалла.

## Радикулитран – ыраш çăнăхĕ

Ыраш çăнăхĕнчен чуста çăрмалла /çĕпре хушмасăр/. Чуста йӳççен пилĕк çине тăваттă хутлатнă марля хумалла, ун çине 1-2 сантиметр хулăнăш чуста вырнаçтармалла. Кашни кунах çĕрле çакăн пек сипленмелле. 10 кунран хăвăра çăмăлрах туйма пуçлатăр. Чустана 30 тумлам скипидар хушма юрать.

Йӳç кăшман. Тасатмалла, теркăпа хырмалла. Ыратакан вырăна йĕтĕн е пир татăкĕ хумалла, çӳхе сийпе йӳç кăшмана вырнаçтармалла. Çиелтен тепĕр татăкпа витмелле. Ăшă утиялпа витĕнсе выртмалла.

## Атеросклерозран сыхланма

● Атеросклероз аталанасран сыхланма кашни кунах 3 апат кашăкĕ олива çăвĕ ĕçмелле.

● 1-2 лимонпа 1 апельсин сĕткенне юхтарса кăлармалла. Вĕренĕ 1 стакан шыва сĕткенсемпе хутăштармалла. Кашни кунах апат умĕн ĕçмелле.

● 300 грамм хĕрлĕ хурлăханран сĕткен хатĕрлемелле. Апатчен çур сехет маларах чĕрĕкшер стакан ĕçмелле.

● Кашни кунах сахăрпа хутăштарса 1-2 чей кашăкĕ хĕрлĕ пилеш çимелле.

**Антонина СЕРГЕЕВА хатĕрленĕ.**

*Тĕлĕнтермĕш юнашар*

# Чăваш паттăрĕсен тĕнчи

Амазонка, Укаслу, Пăрттас, Аспарух, Некей, Вырăк, Алмуш хан, Валем хуçа, Катрак... Чăваш-пăлхар историйĕнче тарăн йĕр хăварнă паттăрсен çирĕме яхăн кĕлетки Атăл хĕрринче «ӳссе» ларчĕ. Пурте вĕсем – хăйăртан.

«Чăваш Енĕн тĕп хулинче çакăн йышши мероприяти йĕркелесси – манăн тахçанхи ĕмĕт, – тет проект авторĕ Андрей Молоков. – Историре палăрнă ятсене аслă ăрурисем манса пыраççĕ, çамрăксем вара чылай чухне вĕсем пирки пĕлмеççĕ те. Хăш сăнара суйласси пирки Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн ăсчахĕсемпе, тĕпчевçĕсемпе канашларăм. Вĕсем сĕннине тĕпе хурса çак темăна йĕркеленĕ».

А.Молоков – ăста скульптор. Вунă çула яхăн вăл хăйăртан тĕрлĕ кĕлетке ăсталать. Йывăçпа та, пăрпа та ĕçлет. Çулсерен Раççейре, тĕнчере иртекен конкурссене, куравсене хутшăнать.

Йĕркелӳçĕ сĕннĕ темăпа скульпторсем композици тăваççĕ. «Тĕрлĕ автор литературине вуланă, тĕпченĕ хыççăн «ылтăнваррине» тупса эскиз хатĕрлетпĕр», – ĕçхĕлпе паллаштарчĕ Мускавран килнĕ Анатолий Лунин. Вĕсем мăшăрĕпе Евгения Георгиевнăпа Укаслу, Эмине, Пăрттас сăнарĕсене калăпланă. Курава иккĕмĕш çул хутшăнаççĕ.

– Ĕçленĕ май сăнар куç умне тухса пырать. Алă хăех ĕçне тăвать. Чылай чухне скульптура эскизри сăнартан пач расна пулса тухать, – теççĕ ăстасем.





– Çакăн евĕр илеме аркатма шел мар-и? – кăсăкланатăп. – Ĕмĕрĕ питĕ кĕске вĕт вĕсен...

– Шел паллах... – ассăн сывлать Евгения Георгиевна. – Хăш-пĕр япалана «чун кĕртме» нумай вăхăт кирлĕ. Тепĕр чухне чунра пуррине хăвăрт ирĕке кăларас килет. Кун пек чухне хăйăр пулăшать.

Шупашкар скульпторĕн Светлана Каруевăн композицийĕн пĕр енче – Валем хуçа, тепĕр енче – Киремет. Ăста курава виççĕмĕш çул хутшăнать. «Çакăн йышши мероприятисем ăсталăха аталантарма, пĕлĕве ӳстерме пулăшаççĕ, ытти хулари, çĕр-шыври маçтăрсен опычĕпе паллашма май параççĕ», – тет С.Каруева.

Сăмах май, Мускав, Рязань, Красноярск, Жуковский, Пенза, Невьянск, Шупашкар скульпторĕсем ăсталанă чăваш-пăлхар паттăрĕсен хулинче истори урокĕсем ирттерме те пулать. Кашни сăнар халăхăн вăл е ку тапхăрĕпе тачă çыхăннă. Унăн паттăр ĕçĕ урлă чăваш халăхĕн кун-çулне йĕрлеме май килет.

Хăйăр кĕлеткесем Атăл хĕрринче авăн уйăхĕччен «пурăнĕç». Çилĕмпе хытарса тунăскерсен ĕмĕрне куллен пăхса тăрса вăрăмлатаççĕ.

■ **В.БАГАДЕРОВА.**

В.СТЕПАНОВ сăн ӳкерчĕкĕсем

*Пулăм*

# Чапаев музейĕ – истори управçи

Хĕрĕх çул каялла – 1974 çулхи çу уйăхĕн 9-мĕшĕнче – Шупашкарта граждан вăрçин паллă командирĕн Василий Иванович Чапаевăн музейне уçнă.

Пуçаруçисем – ВЛКСМ Чăваш обкомĕ тата Чăваш республика тавра пĕлӳ музейĕ. Ыйтăва 1969 çулхи нарăсăн 7-мĕшĕнче ВЛКСМ Чăваш обкомĕн бюро ларăвĕнче сӳтсе явнă.

Музей çуртне чăвашсен авалхи мелĕпе – нимепе – туса лартнă. Çак ĕçе пурнăçлама пин-пин мероприяти ирттернĕ. Чапаевăн çывăх çыннисем – ывăлĕ, артиллери генерал-майорĕ А.В.Чапаев, хĕрĕ К.В.Чапаева, служба енĕпе пĕр-пĕрне лайăх пĕлнĕ артиллери генерал-полковникĕ, Совет Союзĕн Геройĕ Н.М.Хлебников, авиаци генерал-лейтенанчĕ, Совет Союзĕн Геройĕ А.В.Беляков, С.Д.Данильченко генерал-майор – нумай пулăшнă.

Проект хатĕрлекенĕ А.К.Кузьмин тата М.Г.Суслов архитектор çурта илемлетме граждан вăрçин темипе çыхăннă витражпа усă курнă. Унта Чапаев дивизийĕ утса тухнă çула сăнласа кăтартнă. Асăннă произведенисен авторĕсем – А.Ивановпа П.Егоров художниксем. В.Бруындинпа А.Черепанов çуртăн малти енне пăхăр çине çапса утсем ăсталанă.

Музейĕн экспозици залĕ – 110 тăваткал метр, акт залĕнче – 120 лармалли вырăн. Экспозицие хатĕрлеме Чăваш республика тавра пĕлӳ музейĕн ĕçченĕсем асăннă музей фондĕнче упранакан материалсенчен тата В.И.Чапаевăн ачисем, ăна лайăх пĕлнĕ çынсем парнеленĕ япаласенчен хатĕрленĕ. Кунта Василий Чапаев çуралнине ĕнентерекен метрика кĕнекин фотокопийĕ упранать, ашшĕ-амăшĕн, пиччĕшĕсен портречĕсем, Шупашкар хулинчи паллă вырăнсен сăн ӳкерчĕкĕсем пур.

Василий Ивановичăн çарти службиçинчен вăл вăхăтра ӳкернĕ сăн ӳкерчĕксем, фоторепродукцисем каласа кăтартаççĕ. Ентешĕмĕр Тĕнчен пĕрремĕш вăрçинче кăтартнă паттăрлăхшăн Георги хĕресне тăватă хутчен тивĕçнĕ. Граждан вăрçин тапхăрне те чылай экспонатпа – Чапаевăн япалисемпе, вăл вăхăтри хĕç-пăшалпа, тĕрлĕ документпа – пуянлатнă. Музей фондĕнче паттăр ентеш пирки çырнă произведенисем – Д.Фурмановăн «Чапаев» романĕ, Б.Мусоргский композиторăн «Чапай» оперин либретти тата ытти те – упранаççĕ.

Музей композицийĕ пуянлансах пырать. 1986 çулта музейпа юнашар Чапаевсен çурчĕ çĕкленнĕ. Шăпах унта, хула çумĕнчи Будайка ялĕнче туса лартнăскерте, 1887 çулхи нарăсăн 9-мĕшĕнче Василий Иванович Чапаев çуралнă.

Хальхи вăхăтра музей çурчĕ – пысăк комплексăн пĕр пайĕ. Комплекса Чапаев скверĕ, Чапаевсен мемориал çурчĕ, В.И.Чапаев палăкĕ, мемориал стени кĕреççĕ.

■ **Е.ДАНИЛОВА,**

**ЧР патшалăх хальхи вăхăтри истори архивĕн ертсе пыракан архивисчĕ**



## Шупашкартан – Олимп вăййисене

**Çак кунсенче Шупашкарти «Олимпийский» стадионта çĕршыв атлечĕсем çĕртме уйăхĕн 7-8-мĕшĕсенче Китайра çамрăксен хушшинче иртекен Олимп вăййисене хутшăнма путевка çĕнсе илессишĕн тупăшнă.**

Чăваш Ене 44 регионтан 232 спортсмен пухăннă. Икĕ кунра çăмăл атлетсем спортăн 17 енĕпе вăй виçнĕ. Аса илтермелле: тăватă çул каялла тĕнчери чи пысăк ăмăртура Раççей чысне хӳтĕлемешкĕн чи вăйлă атлетсене Шупашкарти тĕп стадионта суйласа илнĕччĕ. Пирвайхи Олимпиадăран пирĕн ентешсем те медальсемпе таврăннăччĕ. Ун чухне Çĕнĕ Шупашкарти Олимп резервĕсен училищинче вĕреннĕ Екатерина Блескина 100 метрлă дистанцире чăрмавсем урлă чупса пĕрремĕш вырăн йышăннă, В.Соколов ячĕллĕ спорт шкулĕнче дзюдо енĕпе ăсталăха туптакан Анна Дмитриева пьедесталăн иккĕмĕш картлашки çине хăпарнă, Раççей спорт мастерĕ Надежда Леонтьева хăвăрт утакансен тупăшăвĕнче «бронза» çĕнсе илнĕ. Çамрăксен кăçалхи Олимп вăййисене хăвăрт утас енĕпе çĕр-шыв чемпионатĕнче мала тухнă Мария Лосиновăн хутшăнма май пулĕ. Команда йышне Азербайджанри стартсен кăтартăвĕсем тăрăх палăртĕç.

■ **А.МИХАЙЛОВ**



## Саламлатпăр



***Çĕр çинчи чи хаклă та юратнă мăшăра, аннене, кукамая, хунямана – Вăрмар районĕнчи Çитмĕш ялĕнче пурăнакан <u>Полина Петровна КОМАРОВĂНА</u> – çуралнă кунпа чун-чĕререн саламлатпăр. Кил ăшшине упраса пурăнма вăрăм кун-çул, иксĕлми телей сунатпăр. Чир-чĕр сан-ран пăрăнса иртчĕр, ватлăха туймасăр мăнукусемпе савăнма турă сывлăх патăр.***

***<u>Салампа мăшăрĕ, виçĕ хĕрĕ, кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем.</u>***

Администрация Батыревского района Чувашской Республики информирует заинтересованных лиц о приеме заявок от граждан и юридических лиц на предоставление земельного участка из земель сельскохозяйственного назначения для сельскохозяйственного производства в долгосрочную аренду сроком на 49 лет с кадастровым номером 21:08:340108:40 площадью 118 кв.м., местоположение: Чувашская Республика, Батыревский район, Шыгырданское с/пос.

Заявки принимаются в течение месяца со дня опубликования в газете по адресу: 429350, Чувашская Республика, Батыревский район, с. Батырево, пр. Ленина, д. 5. Справки по тел.: 8(83532)6-14-26.

Ядринская районная администрация Чувашской Республики согласно постановлению № 360 от 06.05.2014 г. в 09-30 часов 18 июня 2014 г. проводит открытый аукцион по продаже земельного участка категории "земли сельскохозяйственного назначения":

Лот 1. В собственность за плату для сельскохозяйственного использования, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Ядринский район, с кадастровым номером 21:24:060401:76, площадью 21550 кв.м.; начальная цена 16300 руб.

Последний срок приема заявок 16.06.2014 г. Оформление заявок и дополнительная информация по адресу: г. Ядрин, ул. 30 лет Победы, д. 1, каб. 215, тел. (883547)22-4-33 и на официальном сайте Ядринского района www.yadrin.cap.ru в разделе объявления.

Администрация Комсомольского района информирует о предоставлении в аренду земельного участка сроком на 49 лет из земель сельскохозяйственного назначения:

- с кадастровым номером 21:13:030201:60, площадью 19850 кв.м., расположенного по адресу: Чувашская Республика, Комсомольский район, Комсомольское сельское поселение.

Заявки принимаются в течение месяца по адресу: 429140, Чувашская Республика, с.Комсомольское, ул. Заводская, д. 57. Справки по телефону: 8(83539) 51567.

Администрация Асхвинского сельского поселения Канашского р-на ЧР предоставляет в аренду сроком на 49 лет для сельскохозяйственного производства:

- земельный участок площадью 556643 кв.м с кадастровым номером 21:11:141102:240, расположенный по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, Канашский район, с/пос. Асхвинское, земельный участок расположен в западной части квартала;

- земельный участок площадью 300332 кв.м с кадастровым номером 21:11:141102:241, расположенный по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, Канашский район, с/пос. Асхвинское, земельный участок расположен в северо-западной части квартала.

Заявления принимаются в течение месяца со дня опубликования по адресу: 429306, Чувашская Республика, Канашский район, д. Б.Бикшихи, ул. Ленина, д.11а. Телефон для справок 8(83533) 60-6-17.

Администрация Комсомольского района информирует о предоставлении в аренду земельного участка сроком на 49 лет из земель сельскохозяйственного назначения:

- с кадастровым номером 21:13:080601:320, площадью 99425 кв.м., расположенного по адресу: Чувашская Республика, Комсомольский район, Комсомольское сельское поселение.

Заявки принимаются в течение месяца по адресу: 429140, Чувашская Республика, с.Комсомольское, ул. Заводская, д. 57. Справки по телефону: 8(83539) 51567.

Факс: /8352/ 28-83-70.
E-mail:hypar2008@rambler.ru
реклама пĕлтерӳ
Тел.: 28-83-70.
316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ.

РОССЕТИ
МРСК ВОЛГИ
«АТĂЛ–ЧĂВАШЭНЕРГО — РВСК» УАО ФИЛИАЛĔ
ФИЛИАЛ «ЧУВАШЭНЕРГО»

**Уважаемые жители Чувашской Республики!**

**Филиал ОАО "МРСК Волги" - "Чувашэнерго" убедительно просит постоянно напоминать детям об опасности, которую несет в себе электросетевое оборудование:**

**- не позволяйте детям проникать в трансформаторные подстанции и силовые щитки;**

**- запрещайте прикасаться к провисшим или лежащим на земле проводам. Приучайте сообщать о замеченных повреждениях взрослым;**

**- научите детей обращать внимание на предупреждающие знаки и быть предельно внимательными, находясь в непосредственной близости от действующих энергообъектов;**




**- не позволяйте детям влезать на опоры ЛЭП и крыши домов, вблизи которых проходят линии электропередач.**

**Просим Вас контролировать нахождение детей вблизи действующего энергооборудования.**

**Если вы заметили какие-либо неисправности в электрических сетях, звоните по телефонам:**

Северное производственное отделение **8 (8352) 56-29-73;**
Южное производственное отделение **8 (83533) 2-14-74;**
Алатырское производственное отделение **8 (83531) 2-33-89.**

**ПРОДАЮ**

**7.Срубы для бани.** Т. 37-28-74.

**178.Гравмассу, песок, цемент.** Д-ка. Т.: 8-927-849-76-75, 8-927-849-76-74.

**307.Пчелосемьи** "КАРПАТКИ". Т. 89176534903.

**РАБОТА**

**291.Кладовщики, комплектовщики, грузчики.** З/п 34000 руб. Вахта. МО. Прямой работодатель. Т. 89278512030.

**292.Водители-экспедиторы.** З/п 40000 руб. Вахта. МО. Прямой работодатель. Тел. 8-927-851-20-30.

**293.Охранники с удостоверением.** З/п 36000 руб. Вахта. Москва. Прямой работодатель. Т. 8-927-851-20-30.

чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ – ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МИНИСТРСЕН КАБИНЕЧĔ, “ХЫПАР” ХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ
Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ
“Хыпар” индексĕ – 54800, “Чăваш хĕрарăмĕ” – 11515,
“Хыпар”-шăмат кун” – 78353, “Сывлăх” – 11524,
“Çамрăксен хаçачĕ” – 54804, “Кил-çурт, хушма хуçалăх” – 54806.

Директор-тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ
Номер редакторĕ Г.А.МАКСИМОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ-коммерци директорĕ/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ / директор – тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь – техника центрĕн пуçлăхĕ/
Дежурнăй редактор Н.Г.СМИРНОВА

Адрес: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, “ХЫПАР”.
ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор – тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-22-31, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренӳ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-85-87 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-82-91 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ:
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерӳсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ
корр. пункчĕсем:
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай,
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ
hypar2008@rambler.ru
Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.

Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почта:
hypar1@mail.ru
hypar@mail.ru

Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.

РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.

Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем “Реклама çинчен” федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн “Аталану çулĕпе”, “Ят-сум”, “Ĕç тата çын”, “Самана таппи”, “Компетентлă” рубрикăсемпе пичетленеççĕ.

Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.

Тираж 7497. Заказ 1695.